Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 10 ЫТЛАРИКУН 105 (4918) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат — ПĔК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ — Пĕр №-ĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67. Ред. заместителĕн 0—88. Редакци секретарĕн 4—40. Дежурнăйăн 6—23

Строительствă программине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртессишĕн

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн X-мĕш Çессийĕ çирĕплетнĕ план тă-рăх, кăçал пĕтĕм капитальнăй строитель-ствă ĕçне 73 мĕлйун та 49 пин тенкĕ ытлараx хывмала. Халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планĕнче пĕр промышленнăç строи-тельстви кăна иртнĕ çулхинчен 3 хут ытларах пысăк. Коммунальнăй çуртйĕр строительстви йĕнĕне 7.729 пин тенкĕ хывмала. Промышленнăç, коммунальнăй, культура тата ытти строительствăсенчен пысăк пайĕ Чăваш республикин тĕп хули —Шупашкар хули çине тивет. Парти Обкомĕ Шупашкара, Ленин орденлă Чă-ваш республикине тивĕçлĕ социалисăмлă, культурăлă хула тăвас йĕнĕпе тăрăшса ĕçлет. Шупашкарта çĕнĕ савăтсем ларт-мала, коммунальнăй хуçалăх, культура строительстви йĕнĕпе пысăк ĕçсем тума-ла, иртнĕ çулсенче тума пуçланă строи-тельствăсене туса çитермеле т. ыт. те.

Пайăнхи куна илсен, Шупашкарта та, районсенче те тивĕçлипе строительствă ĕçне тытăнман-ха. Пĕр комиссариат та, пĕр хуçалăх организацийĕ те строитель-ствă ĕçне тивĕçлипе тытăнма кирлĕ от-ветлăха туйса илмен тесен те йăнăш пул-маст. Строительствă тутаракан комиссари-атсемпе хуçалăх организацийĕсем строи-тельствă ĕçĕшĕн ответлăха хăйсем çинчен сирсе йама пăхаççĕ. Çав вăхăтрах хăйсем строительствă организацисене чертожсем те, сметăсем те тăратмаççĕ, строительствă организацисемпе договăр тăвас ĕçе пăсса пыраççĕ. Çавăн пекех, строительствă ор-ганизацисем, чи малтан, Стройтрест пĕ-тĕм айăпа заказчиксем çине—строитель-ствă тутаракан комиссариатсемпе хуçа-лăх организацисем çине йăвантарма пă-хаççĕ. Çав вăхăтрах хăйсем тума пуç-ланă стройкăсене 7—8—10-шар çула тăсаççĕ. Ку тĕлĕшпе Шупашкарти строительствă ĕçĕ мĕнле пыни питех те кăтартать. Çавăн пек, кус-чир лечеб-ницине 1933 çултах тăвса пĕтермелле пул-нă, анчах халĕ те туса пĕтермен. 1935 çулта тума пуçланă дезостанцине, 1936 çулта туса пĕтермелли Чăвашторг, Промсоюз универмагĕсене тата ытти стройкăсене çаплах тăвассăн пулсан та, пайăнхи куна та туса çитермерĕç. Стройтрест руководителĕсем пурнăçра ĕçне тăшмансен сăтăрла сийĕнлĕхĕн йў-лашкисене пĕтересси çинчен калаççĕ, çав вăхăтрах хăйсем тăшмансен сăтăрла сийĕнлĕхĕн йўлашкисене пĕтерес, сăтăр-çăсене халăх куçĕ умне туртса кăларас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ, строительствă ĕçне çултан-çула пăтраштарса пыраççĕ. Стройтрестра ĕçĕ хĕрсе пырас вăхăтра, Стройтрест рабочисене отпуска салатса пĕтерет. Налаваи рабочисем хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаç.

1938 çула кĕнĕренпе пĕр квартала ир-тере, иккĕмĕш квартала кĕнĕренпе икĕ уйăх çитет пĕтĕ. Анчах строительствă ĕçĕ вырăнтан тапранни курăнмаст. Строитель-ствă тутаракан организацисем—комис-сариатсемпе хуçалăх организацисем те, строительствă организацийĕсем те (Строй-трест т. ыт.) ку таранччен иртнĕ çул-сенчи меслетсемпе ĕçлеме йурамаиннине ăнланасшăн мар. Вĕсем, сахалтан та парти умĕнче, правительствă умĕнче от-ветлă пуласси çинчен манса кайнă. Вĕ-сем кăçал та, строительствă ĕçĕсене тў-терсе пышăшăн, иртнĕ çулсенчи пек, нимĕнсĕрех иртсе кайасса шанаççĕ пу-лас. Анчах вĕсем чăнахах çапла шутлаç-çĕ пулсан, питех те йăнăшаççĕ.

Строительствă ĕçне ăнăçлă туса пымали условисем вĕсем—кадрсем, строительствă материалĕсем, вăхăтра хатĕрлесе çирĕп-летнĕ пройектсем, сметăсем, вăхăтра ту-нă договăр, строительствăна вăхăтра ук-ça-тенкĕ парса тăрасси т. ыт. те. Анчах çак йĕнчен илсен, пайăнхи куна туса çитерменнисем питех те нумай-ха.

Илĕпĕр строиматериалсем çинчен тă-ракан ыйтăва. Ку таранчченех йăвăç строиматериал хакĕ çинчен ыйтăва татса паман. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çак ыйтăва халех татса парас пулат.

Чăвашвăрманпром, вăрман хатĕрлев планне тултармаишипе, стройкăсене строй-материалсем тăратас ĕçе йăвăрлатат. Вырăнти промышленнăç комиссариачĕ (Самарин йулташ), Промсоюз (Поляков йулташ) предприйатисене строиматери-алсем (кирпĕч, извĕç т. ыт. те) хатĕр-лесе тăратмала тăвас йĕнĕпе начар ĕç-леççĕ. Вĕсенчен ыйтас пулат—тата хă-çанччен вĕсем çакăн пек ўрĕк-сўрĕк ĕç-лесе пыма шутлаççĕ? Росснабсбыт Чă-ваш кантурĕ строиматериалсене вăхăтра тăратманнине мĕнле тўсмеле тата? Госу-дарствă план комиссийĕ тата мĕншĕн хуçа-лăх организацисем строиматериалсене вăхăтра кўрсе килсе вĕсемпе усă курнине кирлĕ пек тĕрĕслесе тăмаст? Патшалăх банкĕ те строительствă ĕçĕсене ăнăçлă пымала тăвас йĕнĕпе тăрăшни курăн-маст.

1938 çулти строительствă программине пĕтĕмпех тултармала тăвасси, иртнĕ çулсенче пуçланă промышленнăç, ком-мунальнăй, культура строительствă ĕçĕсе-не кăçалхи çул вĕçлесе çитермелле тă-вассии, чи малтан, çак организацисем те кирлĕ пек ответлăх туса çитерменни-не килет. Строительствă ĕçĕнче çирĕп йĕрке, дисциплина, организациллĕх кирлĕ. Унсăрăн ĕç малала кайма пултараймаст.

СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Со-вечĕ „Пройектпа сметă ĕçне лайăхла-тасси тата строительствăна укçа-тенкĕ парассине йĕркелесен" çинчен йышăннă постановленийĕ строительствă ĕçне лайăх-латма кирлĕ условисене пĕрни пулса тăрат. Вăл стройкăсене ку таранчен пулнă çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерме тĕрĕс çул кăтартса парат. Çав постановление кашни строитель патне çитерсе ăна куллен пурнăçа кĕртсе пы-мала.

Халĕ РСФСР тата Чăваш АССР Вер-ховнăй Совечĕсен суйлав кампани тата парти органĕсене суйласси пырат. Ра-бочисемпе инженерла-техника работник-сен производствăла-политикăлă актив-лăхĕ куллен кун çĕкленет. Стройкă руко-водителĕсен, стройкăсенчи партипе проф-союз организацисен социалисăмла ăмăр-тупа стахановла йухăма кунсерен вăй-латса, строительствă программине пур йе-нĕпе те пĕтĕмпех тултармала тăвас пу-лат.

Суйлавçăсем союзлă республикăсен Верховнăй Совет депутачĕсене суйлама кандидата тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене палăртаççĕ

Туркмен тата Киргиз СС Рес-публикисенче республикăсен Вер-ховнăй Совет депутачĕсене суйла-ма кандидатсем тăратас майпа суйлав умĕнхи пухусем пуçланнă.

Майăн 7-мĕшĕнче Ашхабадри (Туркмени) Дзержинский йăчĕпе тăракан пир-авăр хапрăкĕнчи вис-çĕмĕш çменăри коллективăн пуху-ĕ пулса иртнĕ.

Чи малтан Лепихăв йулташ тух-са калана.

— Туркмен СС Республикин Верховнăй Совет депутатне суй-лама пĕррĕмĕш кандидата,—тенĕ вăл,—пирĕн аслă Сталина тăра-тăпăр.

Çак сĕнĕве тăвăллăн оваци ту-нипе йышăннă. Пур çĕртен те: „Сывă пултăр пирĕн çулпуç Ста-лин йулташ!" тесе кăшкăрнă.

Туркмен республикин Верхов-нăй Совет депутатне суйлама кан-дидата В. М. Молăтăв, Л. М. Ка-ганович йулташсене, Туркмен СС Республикин Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председательне Айтабай Худайбергенăв йулташа, хапрăкри чи лайăх стахановкăна, хальхи вă-хăтра хапрăк комитечĕн предсе-дателĕ пулса ĕçленине, Сеид Ку-лийĕвăна тăратма панă сĕнўсене пурте ăшă кăмăлпа йышăннă. Сеид Кулийĕва йулташ тăлăх ачасен çуртĕнче ўссе çитĕннĕ, унта вăл ватерщицă пулса ĕçленĕ, кайран бригадир пулнă. Бригадир пулса ĕçленĕ чухне вăл нумайĕшне ла-йăх ĕçлеме вĕрентнĕ, вĕсене хăйĕн опытне панă. Хальхи вăхăтра Сеид Кулийĕва йулташа хапрăк коми-течĕн председателĕ тунă.

Туркмен СС Республикин Вер-ховнăй Совет депутатне суйлама кандидатсем тăратас йатпа нумай çынлă пухусем Ашхабадри ытти предприйатисенче те пулса иртнĕ. Пухусенче Туркмен СС Республи-кин Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата Сталин, Молă-тăв, Каганович, Ворошилăв, Кали-нин, Андрейĕв, Йежов, Буденнăй, Чубин, Худайбергенăв, Бабайĕв, Жидков, Найанăв, Сеид Кулийĕва, Быстров, Иванова тата Бердикăв йулташсене тăратнă.

Майăн 8-мĕшĕнче Киргизи сто-лицинче—Фрунзе хулинче çĕвĕ хапрăкĕнче суйлав умĕнхи пу-хуса пулса иртнĕ. Пуху пысăк çĕкле-нупе иртнĕ.

Чи малтан стахановка Варавина йулташ сăмах илнĕ.

— Мускав Киргизинчен инçет-ре,—тенĕ вăл,—анчах Сталин йул-таш йăлăнах пирĕнпе, йăла-нах Киргиз халăхĕпе пĕрле. Епĕ Киргиз республикин Вер-ховнăй Совет депутатне суйлама кандидата социализм Конститу-цине тăвакан аслă çынна, Ленин ĕçне малала туса пыракана—Ста-лина тăрататтăп.

Çак сĕнĕве тăвăллăн оваци ту-нипе йышăннă. Пурте ура çине тăрса: „Аслă Сталина — урра!", „Сывă пултăр аслă Сталин!" тесе кăшкăрнă.

Хапрăкри чи лайăх çынсем трибунă çине пĕрин хыççăн тепри улăхса са-махсем калана. Вĕсем кандидатсе-не Молăтăв, Каганович, Вороши-лăв, Калинин, Жданăв йулташсене тăратнă. Пухăва пуçтарăннисем çав сĕнўсене тăвăллăн саламлани-пе кĕтсе илнĕ.


— Епĕ депутата суйлама кан-дидата пирĕн чи лайăх стаханăв-кăна, Киргиз халăхĕн чаплă хĕр-не—Кульбарă Байдалийĕвăна тăра-татăп,—тенĕ хапрăк директăрĕ Квитко йулташ.

Байдалийĕва йулташ — парти членĕн кандидачĕ, Киргиз СС Республикин Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суй-лав Комиççин членĕ.

Пуху резолюци йышăннă, унта çапла калана:

„Епĕр Киргиз СС Республикин Верховнăй Совет депутачĕсен сос-тавне сасăлама кандидата хамăр суйлав округĕнчен Сталин, Молă-тăв, Каганович, Ворошилăв Кали-нин, Жданăв, Байдалийĕва йул-ташсене тăрататпăр".

(ТАСС).



Вацлав Вацлавăвич Воровский

Вацлав Вацлавăвич Воровский

(Вилнĕренпе 15 çул тултарнă тĕле)

1923 çулхи майăн 10-мĕшĕнче фашисла çын вĕлеренсен ирсĕр аллинчен, кĕтесрен вăрттăн пенипе, паттăр ĕçре Вацлав Вацлавăвич Воровский вилчĕ. Çулăмла большевик, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне рабочи клас ĕçĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн панă çын вилчĕ.

Воровский йулташ Мускавра 1871 çулта çуралнă. 1890 çулта вăл Мускаври университета вĕрен-ме кĕнĕ, унта студентсен револю-цилĕ йухăмĕнче активлăн хутшăн-са ĕçленĕ. 1895 çултан пуçласа Воровский йулташ Мускаври рабочисем хушшинче пропагандă-лă ĕçе тума пуçланă. 1896 çулта патша правительстви Ворон-ский йулташа вишĕ çуллăха Вйатск кĕпĕрнине йанă. Революцилĕ пропагандăна туса пынăшăн сыл-кăна йанă хыççăн, ăна каллех икĕ çуллăха тĕрмене хупса лартнă тата çĕнĕрен сылкăна йанă. 1903 çулта Воровский йулташ больше-виксем çумне пĕтĕçнĕ, вĕсемпе пĕрле ĕçлеме тытăннă, хăйĕн пур-нăçĕ вĕçне çитиччĕнех большевик-ла партин çирĕп членĕ пулнă.

1905 çулта Воровский йулташ большевикла хаçатăн— „Вперед" хаçатăн редакцине кĕнĕ. 1912 çул-та ăна çĕнĕрен арестлесе Вологдă кĕпĕрнине йанă. Сылкăра пуранса иртернĕ хыççăн, 1915 çулта вăл йут çĕршыва Стокгольма (Швеци) тухса кайнă. 1917 çулхи Февральти буржуалă революци хыççăн, вăл большевикла парти Тĕпкомĕн йут çĕршыври бўро составне кĕнĕ.

Российăри Октăберти Социали-сăмла Аслă Революци çĕнтернĕ хыççăн, Воровскине Скандинави çĕршывĕсенче пĕррĕмĕш совет полпредне лартнă. 1919 çулта, вăл совет Российине тавăрăнсан, ăна государствă издательствин пуçлăхĕ тунă. Çав ĕçре вăл йăвăр услови-сенче творчествăлă пысăк ĕçе туса пынă. Унтан Воровскине правитель-ствă çĕнĕрен дипломатилĕ ĕçе йанă. Вăл аслă çын, нумай вĕрен-нĕ, революцилĕ большевикла хĕрў-лĕ çын пулнă. Çавăнпа та çав ĕç-ре вăл хăйне чаплă дипломат—большевик пулнине кăтартнă. 1921 çулта ăна Италири полпред тунă, 1922 çулта совет делегацин членĕ пулса, Генуйезри конференцинче хутшăнса ĕçленĕ. 1923 çулта Во-ровскине совет правительствин де-легачĕ туса Лозаннăри конферен-цине Швейцарине йанă. Кунта вăл фашисла çын вĕлеренсен пуллин-чен вилнĕ.

Çак вĕлерў вăл фашисла çўп-ça-пăн ăнсăртран пулнă ĕçĕ мар. Ана фашиссен организацийĕ хуш-нипе вĕлернĕ. Вăл организаци Йев-ропăри чылай столицăсенчи мул хуçисемпе—нефть, тимĕр „таварĕн королĕсемпе, „ылттăн михĕн" ху-çисемпе çыхăнса ĕçленĕ. Вĕсем хăйсем пăхăнса тăракан правитель-ствăсем урлă Лозаннăри конфе-ренцире Турцине ăна вăрă-хурах-ла çаратмали договăрпа çыхăнта-расшăн тăрăшнă. Анчах та çав кон-ференцире совет делегацийĕ пул-нă пирки вĕсен ĕçĕсем ăнман, ар-пашăнса кайнă. Совет государ-ствин делегацийĕ, совет диплома-тийĕн çулĕсене çирĕппĕн тытса пырса, хĕнхурта пурнакан халăх-сен хутне кĕрсе калаçнă. Акă мĕншĕн фашисăмăн тĕттĕм вăйĕ-сем фашисла агрессăрсен йăланхи хĕçпăшалĕпе—террăрпа кăтăма çук чаплă дипломата—большевика кĕ-тесрен вăрттăн персе вĕлерессине организациленĕ.

Воровский Лозаннăра курăнсан малтанхи куннех те Швейцари пи-чечĕ тата фашисла елементсем ăна хирĕç ирсĕр компани пуçласа йанă, вăл Швейцаринчен тухса каймасан, ăна вĕлерессипе хăрат-нă.

1923 çулхи майăн 9-мĕшĕнче, ăна вĕлереччен пĕр кун малтан, Воровский йут çĕршыв ĕçĕсен Ха-лăх Комиссариатне çапла çырса йанă: „Епĕр кунта сăнакансем пул-са ларатпăр. Анчах, пире хĕссе кăларса йарасшăн, çуса кăларса йамасан та йарантарса кăларса йарасшăн". Малашне, „совет деле-гацийĕ тĕлĕшпе провокацисем та-та хăратусем тунине кăтартса пар-са, вăл çапла пĕлтернĕ: „Швейца-ри правительстви хăйне çакнашкал тыткалани çак конференцинче мал-тан тунă гарантине намăслăн пăс-ни пулат, çак „ытла та илемлĕ те ырă" çĕршывра пирĕн çине тапăнасси власçем ирĕк тата май панипе кăна пулма пултарат. Ап-ла пулсан, ответне те тытăр".

Тĕрлĕ майпа хăратнине тата провокацисем тунине пăхмасăр, Воровский хăйĕн ĕçне çирĕппĕн туса пынă, çак ĕçре вăл фашиссем тара тытнă çын вĕлеренĕн пул-линчен вилнĕ.

Воровский пите çирĕп боль-шевик, революционер, чаплă пуб-лицист тата дипломат пулнипе, совет правительствин миршĕн кĕре-шекен политикине вĕçне çитиех туса пыракан çын пулнипе уйăрăл-са кайнă.

Воровский йулташăн йачĕ пи-гĕн большевикла партин ăсĕнче, Совет Союзĕнчи халăхсен ăсĕнче ĕмĕрлĕхех йулĕ. Вăл çав халăхсен телейĕшĕн хăйĕн ватăр çул хуш-ши туса пынă революцилĕ ĕçĕнче кĕрешнĕ.

(ТАСС).

Йут çĕршывсенчен килнĕ рабочисен делегацийĕсем М. И. Калинин йулташпа тĕл пулни

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Тĕп Со-вечĕ чĕннипе Совет Союзне Май уйав-не килнĕ йут çĕршывсенчи рабочисен делегацисем Мускавра вунă кун хушши хăналаннă.

Майăн 8-мĕшĕнче, Мускавран СССР Со-йузĕ тăрăх екскурсине тухса кайас умĕн, йут çĕршывсенчен килнĕ делегатсем М. И. Калинин йултащ патĕнче пулнă.

Тухса калаçакан делегатсем Совет Союзĕнче пулса курни çинчен пĕр-ле-рине уççăн каласа панă. Вĕсем Совет Союзне хĕрўлĕн саламланă, унăн калама çук пысăк çитĕнĕвĕсене паллă тунă, вăл миршĕн фашисăма тата вăрçа хирĕç хăйулăн та çирĕппĕн кĕрешнине паллă тунă.

Франци делегацин представителĕ Робер Помйе тата Англи делегацин представи-телĕ Джон Свинейа тухса калаçнă хыç-çăн, Испани делегацин председательне профессăр Хуан Мариа Агиллйара сăмах панă, вăл уçăмлă та хумханулă сăмах калана.

— Манăн çĕршывăм,—тенĕ профессăр Агиллйар, ăна алă çупнипе йышăннă,—пĕтĕм халăх хушшинчи тĕрĕслĕхшĕн, демократишĕн, пирĕн халăх телейлĕ те никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн кĕре-шет.

Пирĕн кĕрешĕве кăмăлланакан тата çав кĕрешўре пире пулăшнăшăн Совет правительствине, СССР Союзĕнчи халăхсе-не мĕнле ырă сунса тав тунине нимĕнле сăмахсемпе те каласа пама çук.

Агиллйар профессăр йут çĕршывсен-чен килнĕ рабочисен делегацисен пред-ставителĕсене пĕтĕм тĕнчипех демократи çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешўре пĕр Испанине кăна мар, тата хăйсен çĕршы-вĕсене те пулăшма чĕнсе калана.

Испани делегацийĕ алă çупнипе Ка-линин йулташа хăйсен парнисене — СССР Союзĕпе культурă çыхăнăвĕн Ката-лони общĕствин хисеплĕ членĕн билет-не, пĕтĕм Каталони алă пуснă альбома, СССР Союзĕнчи Октăберти Социалисăмла Аслă революци 20 çул тултарнă йатпа кăларнă маркăсемпе открыткăсене панă.

Чехословаки представителĕ Ладислав Скауниц çапла калана:

— Германи фашисăмĕ Австрине турт-са илчĕ, хальхи вăхăтра Чехословакине хăратса тăрат. Фашиссем пĕтĕм Вăтам Йевропăна хăйсен аллине саварса илме ĕмĕтленеççĕ.

Литвинăв йулташ СССР Союзĕ хăйĕн пĕтĕм тĕнчери договăрсемпе обйазатель-ствăсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе шанчăклă пулни çинчен пĕл-тернине ăшă кăмăлпа йышăнни çинчен каласа парса, Ладислав Скауниц мо-раль пулăшу парса тăнăшăн Совет Союзне ырă сунса тав тунă.

Австрали, Скандинави çĕршывĕсен та-та Бельги представителĕсем тухса калаç-нă хыççăн, Михаил Иванăвич Калинин йулташ сăмах тухса калана.

Вăл Испани делегацине, ун урлă рес-публикăлă Испанири пĕтĕм халăхсене, парнесем панăшăн ырă сунса тав тунă. Залăра ларакансем пурте республикăлă Испанине чысласа тăвăллă оваци тунă.

Малашне Михаил Иванăвич йут çĕр-шывĕсенчен килнĕ делегацисем панă ый-тусем çине тĕплĕн ответ панă.

Калинин йулташăн чĕрĕ, уçăмлă тата илемлĕ сăмахне час-часах алă çупса йы-шăннă. Вăл уйрăмах Совет Союзĕнчи нумай мĕлйунлă массăсем Испанипе Китай халăхĕсем çине ăшă кăмăлпа тата йу-ратса пăхни çинчен каласа панă. Кали-нин йулташ: Совет çĕршывĕ хăйĕн вă-йĕсем çине шанса тăрат тата хут те хăш агрессăра та тивĕçлипе кĕтсе илĕ, —тенĕ. Вăл çапла каласан залра хыт-тăн алă çупнă.

Калинин йулташпа йут çĕршывсен рабочи делегацийĕсем хушшинчи калаçу пилĕк сехет ытла тăсăлнă.

Делегатсем Калинин йулташа ăшшăн ăсатнă, ăна „Рот фронт" тесе кăшкăрса саламланă.

(ТАСС).

Епрон ĕçĕсем

Епрон (шыв айне путнă карап-сене кăларакан експедици) началь-никĕн заместителĕ Фадейĕв йул-таш пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ 1937 çулта Епрон вăйĕпе шыв айне пут-нă, йе авари пулнă карапсене 84 кăларнă.

Вăл шутран 8 карап йут çĕр-шывран килнĕскерсем. Сăмахран, Англи карапĕ „Орминейер" йатлă-скер т. ыт. те.

Кăçал Епрон водолазĕсем (шыв айне анакансем) нумай ĕççем ту-мала.

Нумайах пулмаст Каçпи тинĕ-сĕнче „Пушкин" йатлă пăрахут тепĕр пăрахутпа хире хирĕç ça-пăнса шыва путнă. Каçпи тинĕс çинчи Епрон експедицийĕ ăна кă-ларма тытăннă. Хура тинĕс тĕпĕн-чен 1916 çулта минă çине пырса кĕрсе шыва путнă „Живучий" ми-ноносĕца кăлараççĕ. Кунсăр пуçне Хура тинĕсре интервенци вăхăтĕн-че путарнă икĕ миноносĕца шыра-са тупмала тата „Мария" пăраху-та кăлармала.

Каçпи тинĕсĕнче 1935 çулта пут-нă „Шаумян" пăрахута ,,Тигр" миноносĕца (граждăн вăрçи вăхă-тĕнче путнă) т. ыт. те кăлармала.

Биробиджанри халăх уйавĕ

БИРОБИДЖАН. Хулана праç-ник чухнехи пек илемлетнĕ. Пур çĕрте те партипе правительствă руководителĕсен портречĕсем, Йеврейсен тата вырăссен чĕлхипе çырнă лозунгсем, плакатсемпе транспарантсем аслă çулпуçне тата ĕççыннисен тусне Сталин йулташа хĕрўлĕн ырă сунса тав тунине кăтартса параççĕ.

Йубилей уйавĕсене, йеврейсен Автономлă облăçĕ вунă çул тул-тарнă май, унта Совет Союзĕнчи халăхсен делегацийĕ пынă. Деле-гаци составне Мускаври, Ленин-градри, Украинăри, Белоруççинчи, Крымри тата Грузири ĕççыннисен представителĕсем кĕреççĕ. Деле-гацине вакзалта кĕтсе илнĕ ĕç-çыннисен нумай пинлĕ демонстра-цийĕ пулса кайнă.

Майăн 6-мĕшĕнче каçхине плош-чĕдре халăхсен калама çук пысăк гульанийĕ пулса иртнĕ. Майăн 7-мĕшĕнче хула каллех музыкă, йурă сасссипе, ташăсемпе йантра-са тăнă.

Майăн 7-мĕшĕнче ирхине театр çуртĕнче облăçри ĕçтăвакан коми-тетăн чаплă пленумĕ пулнă. Пле-нумра пулнисем пурте тăвăллăн оваци тунипе Сталин йулташ пат-не тата унăн соратникĕсем—В. М. Молăтăв, М. И. Калинин, К. Й. Ворошилăв, Н. И. Йежов йулташсем патне саламлă çыру йанă.

Пленум Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Уйрăм Хĕрлĕ Çарăн бойецĕсем, командирсемпе политработниксем патне тата унăн командармĕ Совет Союз Маршалĕ Блўхĕр йулташ патне саламлă çыру йанă.

Мускав делекацин представи-телĕ текстильщицă Горбунова йулташ пленума хĕрлĕ йалав—Иванăвăри ткачсем Биробиджан ĕççыннисене панă парнене тыт-тарнă.

Пленум „Биробиджан 10 çул тултарни" çинчен Облĕçтăвком председателĕн Биглер йулташăн докладне итлечĕ. Лару вĕçĕнче облăçри чи лайăх çынсен списки-не, грамăтăсем тата хаклă парне-сем парса наградăлана çынсен спискине вуласа панă.

Каçхине плошчĕдре красноар-мейĕцсен йуррисемпе ташшисен хĕрлĕ йалавлă ансамблĕ концерт лартса кăтартнă. Концерта про-фессăр орденоносĕц Александрăв йулташ йертсе пынă.

Йеврейсен государствă театрĕ каçхине „Молочник Тевье" йатлă премйерăна кăтартнă.

(ТАСС).

Суйлав умĕн

ШĂМĂРШĂ. (Телефон тăрăх). Районра РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренес тĕлĕшпе 195 кружок ĕçлет. Çав кружоксенче 9192 суйлавçă вĕренет.

Палтийел йалсоветĕнче 12 кру-жок организациленĕ, унта 499 суй-лавçă пĕр сиктермесĕр вĕренме çўреççĕ.

Çавнашкалах Кивĕ Шăмăршă йалсоветĕнче те 374 суйлавçăна кружоксене хутшăнтарнă. Кунта Шишкин агитатăр йертсе пыракан кружока 62 суйлавçă пысăк кăмăл-па çўреççĕ.

Г. Иванов.

Рабочисемпе хресченсем! Суйлав кампанине анлăн сарса пырăр!

Совет халăхĕн политикăлă тата моральлĕ пĕрлĕхне татах та ытларах тĕреклетĕр!

Агитацилĕ ĕçе вăйлатмала

Майăн 8-мĕшĕнче, Канаш хулинче, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççи председателĕсемпе çекретарĕсен канашлувĕ пулса иртрĕ. Канашлува райĕçтăвком председателĕсемпе çекретарĕсем тата парти райкомĕн çекретарĕсем те пухăннă.

Округсенчи суйлав комиççисен задачисем çинчен Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен тĕп суйлав комиççи председателĕн заместителĕ Терентйĕв йулташ доклад туса пачĕ.

ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлав кампанинче лайăх агитатăрсемпе пропагандиссем ÿссе çитĕнчĕç. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Конституцисене, Положенисене суйлавçăсене лайăх ăнлантарса пама вăй çителĕклĕ. Анчах Канаш хулинчи суйлавçăсем хушшинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав Положенисемпе Сталинла Конституцине вĕренесси чăтма çук йапăх пырать. Канаш хулинче суйлав Положенисене тĕплĕн ăнлантарса пама вăй çителĕклĕ. Анчах та ĕçре ÿсĕ агитатăрсемпе пропагандиссене ĕçе йавăçтарман. Хула совечĕн председателĕ Никитин йулташ: „Верховнăй Советсен суйлавне хатĕрленес тĕлĕшпе политикăла агитаци ĕçĕ кирлĕ вырăнта тăмасть, мĕншĕн тесен агитатăрсем çителĕклĕ мар, штатлă пропагандиссем çук“, — тет.

Канашлура тухса калакансем уйрăмăнах Йелчĕк, Патăрйел, Шăхасан, Йĕпреç районĕсенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав Положенисемпе Конституцисене вĕренесси йапăх пынине кăтартса пачĕç. Нĕркеç (Шăхасан р.) йалсовет председателĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав Положенисене вĕренес тĕлĕшпе йалсоветĕнче миçе кружок ĕçленине те пĕлмест. Кунти комсомол пуçламăш организацинче 25 комсомолец шутланать. Анчах та пĕр комсомолец та агитатăр пулса ĕçлемест. Йалсоветĕнче суйлав Положенине вĕренме тытăнман та.

Нумай кружоксенче Положенири статйасене илсе çеç вĕренеççĕ. Паллах ĕнтĕ кун пек ăнланма йавăр. Суйлав Положенисене вĕренессипе РСФСР тата ЧАССР-ĕн пĕтĕм çитĕнĕвĕсемпе, вĕсем хăвăрт ÿссе пынипе çыхăнтарса ăнлантарса памала.

Канашлура пулнисем суту-илÿ организацисем йапăх ĕçленине кăтартса хăварчĕç. Йĕпреç, Шăмăршă тата ытти хăшпĕр районсенче те суйлав литературисем çук. Йĕпреç райпотребсойузĕ Чăвашпотребсойузĕн Канашри бази йарса панă суйлав литературисене кайала тавăрса панă. Халĕ район суйлав литературисĕр ларать. Çапла ĕнтĕ суту-илÿ организацисем суйлав Положенисемпе Конституцисене тата суйлав ыйтăвĕпе пичетленнĕ ытти литературăсене сутас ĕçе организацилемен.

Хаљхи вăхăтра суйлавçăсене шута илсе тухса, суйлавçăсен спискисене тăвас и пырать. Анчах та суйлавçăсен спискисене тĕплĕн тума хатĕрленни сисĕнмест-ха. Канаш хулинче суйлавçăсене шута илсе тухасси йулса пырать.

Суйлав Положенийĕ тăрăх 18 çул тултарнă граждăнсем суйлава хутшăнаççĕ. Çапла ĕнтĕ 1920 çулта ийунĕн 26-мĕшĕнче çурални тарах пурте суйлава хутшăнма тивĕçлĕ. Хăшпĕр вырăнсенче, çак пĕрремĕш хут суйлава хутшăнакансене спискăна кĕртессине тĕрĕс тумаççĕ. Шăмăршă районĕнчи Кивĕ Шăмăршă йалсоветĕнче 1920 çулта çуралнисене пурне те (ийунĕн 26-мĕшĕ хыççăн çуралнисене те) суйлавçăсен спискине кĕртме шут тытнă.

Суйлав участкисенче пурлăха тимлĕн пăхса усрамала. Тăвай районĕнчи Кармал йалсоветĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă чухне тунă кабинăсене çухатса пĕтернĕ. Суйлав йешчĕкĕсене çăмăр айĕнче выртарнă тĕслĕхсем те пур.

Агитатăрсем уйра

ВАРМАР. Аслă Чакри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозра РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренес ĕç саралсах пырать. Суйлав саккунĕсене колхозниксемпе колхозницăсем тĕплĕн вĕренеççĕ. Агитатăрсем колхозниксене кружоксенче вĕрентнисĕр пуçне, уйра хаçатсем тăрăх ăнлантарса параççĕ.

Колхозра 5 кружок ĕçлет, кашни кружокра 25 суйлавçă вĕренет. Занятисем вулав çуртĕнче, колхоз правленинче, шкулта пулса иртеççĕ.

Вулав çуртĕнче суйлав Положенине вĕренмели литература, хаçат-журналсем тата партипе правительствă йышăннă постановленисен витринине тунă. Кашни каçах колхозниксем вулав çуртне кĕнекесем, хаçат-журналсем вулама çÿреççĕ. Колхоз правленинче радио ĕçлет. Агитатăрсем шкул директорĕ А. Ильин йертсе пырать. Вăл агитатăрсемпе 5 хутчен семинар туса иртерчĕ. Колхозниксене пуçха суйлав Положенине те, та Совет Союзĕнчи çитĕнÿсемпе тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарать. Суйлавçăсен активлăхĕ ÿссех пырать. Ильин Анисим, Никифарав Леонти, Йакавлев Геннади комсомолецсем агитаципе пропаганда ĕçне анлăн туса пыраççĕ. Вĕсем хиртех колхозниксене суйлав саккунĕсене вĕрентеççĕ.

В. Андрийанăв.

РСФСР Верховнăй Совечĕн суйлавĕ тĕлне ИЗОГИЗ кăларакан Г. Шубина художницă ÿкернĕ плакат—„Пурте РСФСР Верховнăй Советне суйлама!“

(Союзфото).

Суйлава ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ

ТĂВАЙ. Çĕнĕ Ишпус йалсоветĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренес ĕçе аван йĕркелене. Пайанхи куна суйлав Положенине колхозниксемпе йединоличниксем пухăвĕсенче 2 хутчен, бригадăсенче 3-шер хутчен тĕплĕн ăнлантарнă. Кунсăр пуçне кашни кун бригадăсенчи политвулавçăсем тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе ССР Союзĕнчи çĕнĕ хыпарсем çинчен вуласа ăнлантараççĕ. Колхоз правленийĕ кашни бригадăна „Чăваш Коммунĕ“пе, „Большевика колхозшăн“ хаçатсене çырăнса панă. Йалта пурĕ 14 агитатăр ĕçлет. Агитатăрсем политикăлă агитаци ĕçе вăйлатсах пыраççĕ. Йалсоветра суйлава хатĕрленес ĕç вăйланса пынипе пĕрлех, государства умĕнчи тивĕçсене парса татаççĕ, çуракине кĕске срукрах интересснĕн ăмăртса ĕçлессине вăйлатаççĕ. Майăн 7-мĕшне йалсовет аш-какай парас çурçуллах планне 121 процент пурнăçланă. Çул çине чул, хăйăр, траве çитерлĕсе турттарса хатĕрлерĕ, 200 кубла метр вăрман касса хатĕрлесе турттарнă. Халĕ колхозниксем йал тавра... çурхи шыв ватнă вырăнсемпе кĕперсене йусаççĕ.

Чутей йалсовечĕ те суйлава хатĕрленмелĕ майĕн хăйĕн ĕçĕсене лайăхлатрĕ. „ССР Союзĕн Оборонине тĕреклетмели“ заём укçине кĕске хушăрах 11348 тенкĕ пухрĕ. Самообложени укçине пухас ĕç те анлăн саралса пырать. Колхоз аш-какай парас çулталăкри плана 97 процент пурнăçланă. Халĕ 30 кубла метр чул кăларса хатĕрлесе хунă. Суйлав Положенине вĕренес ĕçе аван йĕркеленĕ. Колхозниксем хирте ĕçлеме ĕçре Испанири, Китайри т. ыт. йут çĕршывсенчи ĕçсем çинчен вуласа параççĕ.

Вырăс Нарваш йалсоветĕнче суйлав Положенине кашни суйлавçă вĕренет. Ку тĕлĕшпе колхозниксем асла пухăвĕсенче 3 хутчен, уйрăм кружоксенче 7 занăти пулса иртнĕ. Кружока Федарăв йулташ йертсе пырать.

Вл. Ильин.

Участкăри суйлав комиççи çурчĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Патăрйелĕнчи участкăри суйлав комиççийĕ суйлав пулса иртмели çурта хатĕрлесе çитерне. Комиççи ĕçлекен çурта телефон, радио кĕртнĕ. Кунсăр пуçне, çурта Ленин, Сталин, Молотăв, Ворошилăв, Калинин йулташсен портречĕсене тата тĕрлĕрен плакатсем çыпăçтарнă.

Г. Иванов.

Хĕрарăм—советра тата колхозра

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Вăрман-Йенĕш йалсоветĕнче хĕрарăм суйлавçăсем пурĕ 272 çын шутланаççĕ. Вĕсем пурте ССРС Верховнăй Советне суйланă чухне коммунистсемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă. Халĕ хĕрарăм-суйлавçăсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совет суйлавĕсене иртерме хатĕрленеççĕ. Вĕсем пикенсех суйлав Положенисене вĕренеççĕ.

Кунта хĕрарăмсем советра тата колхозра пысăк вăй пулса тăраççĕ. Йалсовет сумĕнчи çекцисенче 8 хĕрарăм ĕçлет, вĕсенчен 7-мĕш тĕрлĕрен çекци членĕнче тăраççĕ. Иртнĕ суйлавра суйлавçăсем Зайцĕвă Йевдокине, Йамашовă Униççене, Алексейĕвă Марйене тата Сергейĕвă Федорăна йалсовет членне суйласа хăварнă. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕçсене пурнăça кĕртсе пынă. „Звезда“ колхозри депутаткăн Сергейĕвă Федорă 1936 çултанпах „Звезда“ колхозра звеноводра ĕçлет. Унăн 12 хуçалăхран тăракан звени иртнĕ çул пур звеносенчен те вăйлă тырпул туса илнĕ. Вăл йалсовет ĕçĕнче те хастарлă хутшăнса ĕçлет. Кунта финанс çекци членĕнче, тата культурăпа йăла çекци руководителĕнче ĕçлет. Сергейĕвă йул. хăйĕн çекци членĕсемпе кăçал 3 хутчен канашлу туса иртернĕ, Братйакасси йалĕнче 8 хутчен тасалăх мĕнле тăнине тĕрĕслесе тухнă.

Кирек хăш вăхăтра та вăл кашни колхозник йепле пурăнни çинчен питĕ те тĕплĕн каласа пама пултарать.

Çеменăвă Ксени — выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес йенĕпе, Йанукова Ољгă тасалăх çекцинче, Йашманăвă Униççе — финанс çекцинче чи лайăх ĕçлекен членсем пулса тăраççĕ.

Хĕрарăм — колхозра пысăк тата хăватлă вăй пулса тăрать. Иртнĕ çулта „Звезда“ колхозра 4 колхозницă звеноводсем пулса ĕçленĕ. Колхоз производствинче хĕрарăмсенчен 6 çынна стахановкă йатне панă. Акă вĕсем: Харитонăвă, Петровă Пăлаки, Харитонăвă Х., Сергейĕвă Ф. Кăçалхи çуракинче П. Петровă, А. Васильĕвă, Харитонăвă колхозницăсем плугар пулса ĕçлеççĕ.

Колхозра таварлă сысна ферми пур. Фермă пуçлăхĕ Русаков Дмитрий; иртнĕ çул кăна Хĕрлĕ Çартан таврăннăскер. Ыттисем пурте хĕрарăмсем. Максимăвă Йевгени фермăра 1935 çултанпах пĕр улшăнмасăр ĕçлет. Колхозницă Петровă Аннă коњухра ĕçлет. Лебедĕвă Анна колхоз правлени учетчикĕнче ĕçленĕ, халĕ вăл декретлă отпуска кайнă.

1937 çулта Йашманăвă Униççе трактăрисен курсне вĕренсе тухнă. Çавăн хыççăн вăл тÿрех трактăрпа ĕçлеме тытăннă. Кăçал Униççе трактăрпа ĕçлесе чи пысăк ĕç тухăçлăхĕ пама обйазателствă илнĕ. Колхоз производствинче хĕрарăмсенчен 12 ударницă — стахановкă ÿссе палăрнă. Анисимăвă Верă хăй пĕччен 300 ĕçкунĕ туса, 150 пăта йăхăн тырпулсем илнĕ. Алексейĕвă Дарйе 200 ĕçкунĕ тунă.

Иртнĕ çул ку колхозри 7 хĕрарăм ака патĕнче ĕçленĕ пулсан, кăçал 15 хĕрарăм ака тунă, тата сÿреленĕ çĕрте ĕçлеççĕ.

1937 çултан пуçласа колхозăн йатарласа уйăрнă пахча-çимĕç бригадин бригадирĕнче Мурçайĕвă Марйе ĕçлет. Алексейĕвă Наташ темиçе çул хушши ĕнтĕ лашасене пăхать.

1937 çултах комсомолкă Зайцĕвă Йевдоки трактăрисен курсне вĕренсе пĕтерсе, трактăр çинче ĕçлеме пуçланă. Ку колхозрах драмкружок пур, унта 8 хĕрача тăраççĕ.

В. Чернов.

Хĕрарăм агитатăрсем лайăх ĕçлеççĕ

— РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес ĕçре Шупуç йалсовечĕ пек ĕçлемеле, тесе сĕнеççĕ Тутаркас районĕнчи работниксем ытти йалсоветсене. Чăнах та вĕсенчен вĕренмели пур. Йалсоветĕнче суйлава хатĕрленес ĕçе Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком членĕ Л. И. Йашмолкинă йулташ йертсе пырать. Вăл хăйне суйлавçăсем шанса панă культçекци руководителĕн ĕçĕнче те лайăх, вăй хурса ĕçлет. Уйрăмăнах вăл хĕрарăмсем хушшинче тăрăшса ĕçлет. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес ыйтупа икĕ хут хĕрарăм-суйлавçăсен пухăвĕсене туса иртерчĕç.

— Кашни çыннăн интересне уйрăмăн пĕлес пулать, — тет Йашмолкинă йулташ. Çавăнпа вăл политикăна лайăхрах пĕлекен хĕрарăм активисткăсемпе Положенисене вĕренмели кружок занятисене уйрăмăн ирттерет. Ку кружокра 40 çын ытла вĕренеççĕ. Вăл кружокра 6 занятти иртернĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кампани пуçланнă хыççăн кружокра вĕревекенсен хисепĕ татах ÿсрĕ. Хĕрарăм активисткăсене вĕрентме татах тепĕр кружок организацилерĕç.

Кружокра вĕренекен хĕрарăмсем Йашмолкинă йулташа политикăла ыйтусене ытти колхозниксене ăнлантарса пама пулăшаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ хăйсем çумне çирĕплетнĕ килсенче суйлав саккунне вĕрентеççĕ.

Çак çулта йалсоветри хĕрарăмсемпе 4 пуху иртерсе партипе правительствăн постановленийĕсене сÿтсе-йавнă. Çак кунсенче „Коммунар“ колхозĕнчи колхозниксем пухăнса Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ „Колхозниксене колхозран кăларма чарасси çинчен“ йышăннă постановленине сÿтсе-йавнă.

„Коммунар“ колхозĕнчи стариксем М. И. Калининăн „Совет власĕ ĕççыннисене мĕн пачĕ“ йатлă кĕнеки тăрăх вĕреннеçĕ. Ку кружокра ватă колхозниксемпе уйрăмăн 7 занятти иртернĕ.

— Вĕренмесĕр йулас марччĕ, нумайрах пĕлесчĕ, тесе кружока çÿреççĕ, — тет кружок руководителĕ Љуба Ивановнă. Чăнах та пурте вĕренесшĕн. Шупуç йалсоветĕнче нумайăх та пулмасть 15 кружок çеç ĕçлеччĕ, халĕ 18 кружока çитрĕ. Суйлав Положенине 386 суйлавçă вĕренет, вĕсенчен çурри ытла хĕрарăмсем.

Ç. Горланăв.

МУЧИ

Вăл пурнакан çĕнĕ пÿртĕн чÿречисем çинче хĕлĕн-çăвĕн çеçке куракĕсем чĕрĕлеççĕ. Стена çумĕнче, пысăк тĕкĕрсĕр пуçне, тĕрлĕрен сăнÿкерчĕкĕсем çакăнса тăраççĕ: граждăн вăрçи вăхăтĕнчи сăнсем, хаљ-хаççăн ÿкернĕ, çемйипе пĕрле ÿкернĕ сăнсем тата ыт. те. Чи куранакан вырăнта, — Аслă çулпуçăн сăнĕ. Аслă Сталин сăнĕпе йунашарах ССР Союзĕн картти çакăнса тăрать. Ун çине кашни пăхмассеренех:

— Хĕвеллĕ çĕршывăм, телейлĕ çĕршывăм, ирĕклĕ, асла çĕршывăм! — тесе илет Кавăрле мучи.

Суйлава хатĕрленнĕ май вăл, тăван çĕршывăн карттипе нихçанхинчен те ытларах интересленет. Пăхать. Акă Мускав — çĕршывăн чĕри. Акă Ленинград — Аслă Октябĕрĕн вучахĕ. Кийĕв, Минск, Ашхабад, Сталинабад, Алма-Ата.. Пурте хамăрăн хуласем. Чечеклĕ çĕршывăн чечеклĕ хулисем.

Акă, Курск, Воронĕж, Ростăв...

Дон çи-Ростăв тĕлне çитсен чылайччен чăрăнса тăрать Кавăрле мучи. Тарăн шухăша кайать. Манми хула. Вăл хулари нихçан асран кайми кунсем халĕ те куç умĕнчех.

Вунтăххăрăмĕш çул. Çентябĕр. Кавăрле мучи — йалта. Вăл чухăнсен комитечĕнче ĕçлет. Вăл, патша вăрçинче пулса курнăскер, салтак пурнăçĕ мĕнле пулнине, вĕсем камсемшĕн вăрçа йун тăкнине йал-йышсене ăнлантарса парать.

— Йунлă Николай мар, Керенски те мар, — пире большевиксем ирĕке кăларчĕç! — тет Кавăрле мучи. — Большевиксем çеç хресченсене çĕрлĕ турĕç. Большевиксем çеç лăпкă саманашăн кĕрешеççĕ. Акă, пирĕн çамрăк çĕршыва пур йенчен те тăшмансем тапăнаççĕ. Çавсене тĕпĕ йĕрĕнех çĕмĕрмесĕр нихăçан та лăпкă самана, кирлĕ пурнăç пулмасть.

Çавăнтах Кавăрле мучи хăйĕн ывăлĕн, Хĕрлĕ Çар ĕретĕнчи Урттемĕн çырăвне вуласа парать.

— Акă, итлĕр, — тет вăл, — мĕн çырать манăн Урттем: ...„Буденнăй утлă çарĕпе пĕрлешсе утлă кун та утлă каç вăрçнă хыççăн Воронĕж хулине Мамăнтăв генерал çарĕнчен пĕтĕмĕшпех тасатрăмăр. Халĕ унăн хавшаса йулнă çарĕ Шкурă бандит çарĕпе хутшăнса пире хирĕç кĕрешме хатĕрленет, теççĕ. Ĕнен, атте. Епĕр çав тăшмансене, халичченхи пекех, мĕн пур хăйарлăхпа çĕмĕрсе тăкатпăр. Епĕ хаљ кăштах аманнă, кунта, Воронĕж хулинчи пуљницăра выртатăп. Час сывалса каллех стройа тăрасса шанатăп. Ан пăшăрхан, атте. Сывалатăп. Часах манăн унта пĕчĕкки çуралать пулĕ ĕнтĕ, пĕлтерĕр..“

— Ну, малала çемйе ывăлĕсем, — тенĕ Кавăрле мучи. — Малалине вуламасан та йурĕ. Мĕн вăй çитнĕ таран пулăшар хамăрăн Хĕрлĕ Çара! Мĕн пур вăйа, кирлĕ пулсан пурнăçăмăра та памашкăн хатĕр тăрар!

Сахал мар тыра тата ытти çимĕçсем Хĕрлĕ Çара ваљти панă. Йалти пурнăçа чухăнсем хăйсен аллине илнĕ. Кулаксен пытарнă тыррисене тупса тийе-тийе тухнă. Йалти клас кĕрешĕвĕ никçанхинчен те ытларах çивĕчленсе кайнă.

Урттем çинчен нумай шухăшланă Кавăрле мучи. Шухăшланă шухăшне ун пурнăçа кĕртес килнĕ. Йулашкинчен вăл: „Кайса килем-ха, халĕ пуљницăра чух хăйне курса та пулин, ывăл ачи çуралнине пĕлтерсе те пулин килем“, тенĕ.

Пĕчĕкçĕ Йакку сăпкара лăпланса выртнă. Унăн илемлĕ сăнĕ пĕтĕм пÿрте сутатпăн туйăннă.

Кавăрле мучи Йакку çине чылайччен пăхса тăнă. Пăхса тăнă-тăнă та каланă:

— Канлĕн çывăр, чунăм. Аçу санран çирĕм çул аслă, аслаçу — хĕрĕх çул. Çывăр. Аслаçу аçу патне, сан йатупа пысăк салам калама кайать.

* * *

Воронĕж хулинче лăпкă пурнăç тăнă. Аçта пăхнă унта хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшнĕ. Аçта пăхнă унта: „Хĕрлĕ Çар ĕретĕнчи паттăрсене хĕрÿллĕ салам!“ „Сывă пултăр çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пыракан Хĕрлĕ Çар!“, „Сывă пултăр Ленин!“ тейекен лозунгсем куçсене илĕртнĕ.

Ку хулара Кавăрле мучи вăхăтлăха çеç чарăнса тăнă. Урттеме пуљницăра тупайман. Урттем стройра, тесе пĕлтернĕ ăна. Çапах ывăлăма курмала манăн тесе, вăл хулари ревкомран путевкă илнĕ. Часах Ростăв йенеле çул тытнă.

Дон шывĕ катаранах курăнса, хумлăн-хумлăн йаванса йухса выртнă. Çентябĕр çилĕ тапхăр-тапхăр хайарран шăхăрнă, тапхăр-тапхăр лăпланнă. Тÿпере мăнтăркка пĕлĕтсем умлăн-хыçлăн, йăсăрланса хĕвелтухăçĕ йенеле васкавлăн шăваннă. Утнă Кавăрле мучи. Пĕлнĕ вăл. Урттемсем инçех мар, вĕсем ĕнер çеç Воронĕж патĕнче тепĕр хут çапăçнă хыççăн малала кайма пуçланă.

Хĕвел анасси инçех йулман. Çак вăхăтра Кавăрле мучи, килтен тухнăранпа пĕрремĕш хут тупă сасси илтнĕ.

Каç пулнă çĕре пĕр йала пырса кĕнĕ. Йал çумĕнчи таса çерем çинче хурлăхлă музăкă йурланине илтнĕ. Унта çар тумтирлĕ çынсем, çураннисем, йуланутлисем кĕпĕрленсе тăнă.

— Мĕн.. Камсем вĕсем?

— Хĕрлисем. Çапăçура вилнĕ йулташĕсене пытараççĕ, — тенĕ пĕр ватă хресчен. — Пайан вăйлă çапăçу пулнĕ кунта. Пирĕн йала хĕрлисем çĕнсе илчĕç. Пирĕн йала çеç мар, пайан вĕсем пирĕн уйесри йалсене пĕтĕмпех шурă бандитсенчен тасатрĕç. Ху кам вара есĕ? —

Камне пĕлтерсен, Кавăрле мучине хăй патне чĕнсе кĕртнĕ ватă хресчен. Пÿрте кĕрсенех сасартăк пĕчĕкçĕ ача пек макăрса йанă вăл.

— Акă ĕнтĕ кур, тăванăм, — тенĕ хресчен, пушă пÿрт ăшне кăтартса. — Çавсем вĕт, çав Шкурă генералăн салтакĕсем мана пĕччен тăратса хăварчĕç. Икĕ ывăлăм Хĕрлĕ Çар ĕретне хăйсен ирĕкĕпе кайрĕç. Пĕр кин тата 16 çулхи хĕрĕм пурччĕ. Вĕсене вара манăн ывăлсемшĕн вĕчĕхсе, хам умрах пусмăрласа намăс турĕç. Йулашкинчен хăйсемпе пĕрлех илсе кайрĕç.

Татах та нумай каланă хресчен.

— Есĕ ывăлна шыратăн апла, — тенĕ вăл йулашкинчен. — Тупайăн-ши? Кунта нумайăн вĕт вĕсем.

Кавăрле мучине хĕрлĕармейецсем пысăк хаваслăхпа йышăннă. Анчах, Урттем çук. „Кам пĕлет, — тесе шухăшланă мучи хăйĕн ăшĕнче, — тен çав çерем çине алтнă шăтăка кĕрсе выртнă Урттем“. Çук. Çапах та шанчăк çухалман-ха.

Кавăрле мучине батаљйон командирĕ хăй патне чĕнсе илнĕ. Ăна Урттем çинчен хыпар пĕлтернĕ. Урттем, отделени командирĕ, сывă. Вăл хăйĕн бойецĕсемпе пĕрле разведкăра, тăшмана йĕрлесе малала кайать. Час-часах сведĕнисем йарса парать. Акă, йулашки сведĕни, ăна тин çеç илнĕ. Тепĕр сехетрен батаљйон наступлени тума пуçлать.

— Апла пулсан, епĕ те, — тенĕ Кавăрле мучи. — Епĕ те сирĕнпе пĕрле пыратăп.

Командир килĕшнĕ.

Кавăрле мучи — ответлă ĕçре. Вăл — обозра. Вăл — лавçă. Вăл — патрунсем тийенĕ лавăн ответлă хуçи.

Умра вăрçă уйĕ — хăрушă уй. Малтанхи кунсенче шурă бандăсем нимĕн йĕркесĕр кайала чакнă. Шур бандăсенчен йал хыççăн йал тасалса пынă. Икĕ кун хушшинче батаљйон çĕр çухрăма йахăн малалла шунă. Анчах, виççĕмĕш кунне, виççĕмĕш кунне вара тăшман хăйĕн йулашки вăйне кăтартма шут тытнă. Хăйар çапăçу тул çутăлнă-çутăлманах пуçланнă. Хăйар çапăçу Дон шывĕ хĕрринче пулнă. Дон шывĕ хумлăн-хумлăн йаванса йухса выртнă. Çĕр кисренсе чĕтренĕ. Пăшал, пулемет сасси, тупă пенĕ сас хăлхаран кайман.

— Ку пирĕн йулашки, татăклă тытăçу, йулташсем! — тенĕ паттăр командир. — Ыран ирхине Ростăвра пулатпăр. Малала, йулташсем! Нимĕн хăрамасăр!.

Лав пушанать. Пушаннăçемĕн пушанаççĕ патрун тийенĕ лавсем. Кавăрле мучи хăйĕн патронĕсене сулахай флангра шатăртатса ларакан пулемет патне йăтмала, çапла приказ. Йăтать вăл. Ывăннине пĕлмесĕр сĕтĕрет. Акă, иккĕ хутларĕ. Виççĕ. Курать. Паттăр пулеметчиксенчен пĕри йăванлă. Йун йухтарса выртать. Ăна Кавăрле мучи хăй алли çине илсе обоз патне çитерет, çестрасен аллине парса хăварать. Хăй тепĕр хут кайать. Пĕччен йулнă пулеметчик патне патрун йăтса пырать. Вăл çитнĕ-çитменех умран инçех те мар тупă йĕтри кĕрслетсе çурăлать, çĕр çĕкленет, тем тарăнĕш шăтăк чавăнса йулать. Пулемет урăх вырăна куçать, тăшман сăнама пултарайман лапамлă, хÿтлĕхе пăрăнать.

— В атаку.. Марш! — тенĕ сасă, командир сасси илтĕнет. — Урра-а-а!..

Пулемет çаплах шатăртатать. Ăна тата маларах куçараççĕ.

* * *

Тепĕр кун ирхине Кавăрле мучи лазаретре выртакан аманнă çынсен хушшинче вăраннă. Унăн мăйне шурă марлĕпе чăркана пулнă. Мăй таврашĕ сăрăлтатса ыратнă. Хăй суранланнине вăл тин çеç туйнă. Анчах, суран çинчен мар, чи малтанах Ростăв хули çинчен пĕлесси килнĕ унăн:

— Хулана çĕнсе илейнĕ-и пирĕн батаљйон?

— Илнĕ! — тесе çăмăллăн ответленĕ çестра. — Ху та çав хулара вĕт. Ростăв хулинчи лазаретра выртатăн.

Ăнланнă Кавăрле мучи. Йĕри-тавра пăхкаланă вăл. Куçĕсемпе такама шыранă. Анчах, йăвăр. Суранланнă мăй выртăнтан хускалма паман.

Икĕ ерне выртнă хыççăн сывалса çитнĕ Кавăрле мучи. Тухтăрсене чĕререн тав тунă. Çак лазаретрах хăйĕн ывăлне Урттеме тĕл пулнă. Анчах ку тĕлпулу.. ытла та кайа йулса пулнă. Нимĕн хускалмасăр выртнă Урттем — хĕрлĕ командир. Çапах унăн сăнĕ çинче паттăрла çĕнтерÿ палли саванăçлăн йалкăшса çиçнĕ. Кавăрле мучи куçĕсенчен вĕри куççуљ тумламĕсем шăрçаланса аннă. Çав кун вăл хăйĕн пĕртен-пĕр йуратнă ывăлĕнчен ĕмĕрлĕхе уйрăлса киле тухса кинĕ. „Ытла та шел, — шухăшланă Кавăрле мучи. — Йакку йатлă ывăлĕ çуралнине те хăй каласа пĕлтереймерĕм“.

— Тăвансем нумай йун тăкса кĕрешни ахаљ сайа каймарĕ, — тет Кавăрле мучи.

Хаљ вăл йалти йатлă çын, колхозра аслă коњух пулса ĕçлет. Ку ĕçри çитĕнÿсемшĕн правлени ăна патефон тата Сталин йултăшăн докладне çырнă пластинкăсем парса премиленĕ. Акă пайан, апат хыççăн, вăл Йаккăва патефон майлантарма хушрĕ.

Йакку — вуннăмĕш класра вĕренекен отличник. Урттем пекех, ашшĕ пекех — çап-çутă сăнлă. Куçĕсем шурăмпуç çăлтăрĕ пек çивĕччĕн йăлкăшаççĕ. Çамрăклах унăн çÿçĕсем анлă çамки урлă илемлĕн усăнса выртнă. Йакку — кăçал вунсаккăр тултарать. Кăçалхи çул вăл суйлав прави илсе Аслă Совета депутатсем суйлас ĕçе хаваслăн хутшăнать.

Патефон майланчĕ. Кавăрле мучи итлет. Йакку итлет. Аслă Сталинăн докладĕ пуçланчĕ.

Тулта çурхи хĕвел. Пайан ир çеç çуса иртнĕ ăшă çăмăрпа лÿшкеннĕ çĕр питне вăл çупăрласа хĕмленет.

Митта Петĕрĕ.

Хĕрсем хушшинче ĕçлесси

„Асамат" йалĕнчи (Елĕк р-не) комсомолăн пуçламĕш организацийĕ çак мăн уйăхĕн 2-мĕшĕнче йалти çамрăк хĕрарăмсен пухăвне ирттерчĕ. Комсомол организацийĕ (комсорг Степанăн йулташ) халиччен вĕсем хушшинче ĕçлемен пулнă,—ку йалти комсомол организацинче пĕр хĕр те пулман. Мĕн каларĕç-ха çамрăк хĕрарăмсем пухура? Вĕсем комсомол организацине, хăйсем хушшинче ĕçлеменшĕн вирлĕ критиклерĕç. Акă мĕн калаççĕ вĕсем пурте пĕр çаврăнтан тенĕ пек:

— Пирĕн çине çавранса та пăхмастăр.

— Радио мĕншĕн лартмастăр.

— Пире пăшал пеме вĕрентес пулат.

— Пирĕн врач лекцисене итлес килет.

— Хор кружокĕ тата драмкружок уçсан, епĕр выльама та, йурлама та çÿретпĕр.

Çакăнтан ĕнтĕ хĕрарăмсен активлăхĕ пысăкки, анчах комсомол организацисем вĕсен хушшинче ĕçлемени курăнса тăрат.

Пирĕн районра 35 пуçламĕш организацинче пĕр хĕр те çук. Вăл паллах ĕнтĕ, комсомола кĕрес текен хĕрсем çукран мар, комсоргсем йалти стахановкăсене, ударницăсене курмарăн килет. Çапла Йĕсхремкассинчи, Тукачри тата Лупашкари комсомол организацисенче пĕр хĕр те пулман. Унта çамрăк хĕрарăмсен пухăвĕсене иртерсен 5 хĕр комсомола кĕчĕç.

— Епĕр тахçанах комсомола кĕрес тенĕччĕ, анчах пире пухусене чĕнмесчĕç, пирĕнпе ĕçлемесчĕç,—терĕ Етриванăн йулташ комсомола кĕнĕ чухнех.

Çамрăк хĕрарăмсем хушшинче ĕçлемели майсем питех те нумай. Епĕр хамăр районра кашни колхозрах хĕрсен пухăвĕсене ирттертĕмĕр. Çак ĕçе туна хыççăн 1938 çулхи 4 уйăх хушшинче 49 хĕр комсомола кĕчĕç. Анчах ку вăл пит çителĕксĕр-ха.

Çамрăк хĕрарăмсене комсомол организацине усă пухăвĕсене, политкружоксене, вечĕрсене, йалти тĕрлĕрен общĕствăлă ĕçсене хутшăнтарас пулат. Çак ĕçе комсомол организацисен куллен кун туса пымала.

Комсомолĕцсен халăх хушшинче, çамрăксен умĕнче пур йенĕпе примерлă пулмала. Çакна пирĕн йулташсем хăш чухне манса кайаççĕ. Акă, илĕпĕр, пирĕн организацири комсомолĕцсенчен авлăннисем 28 процента йахăн. Вĕсен пурин те хăйсен арăмĕсене политикăлла пурнăçа: общĕствăлă ĕçе, пухусене, кружоксене активлă хутшăнтарма, спектакльсене, кино кăтартма, вечĕрсене те илсе çÿреме тăрăшмала. Анчах нумай комсомолĕцсем, çисмене активиссем те, хăйсен арăмĕсем политикăлла пурнăç тулашĕнче йулнине çитменлĕх тесе те шутламаççĕ. Çавăн пек йăлана пăрахма, çав çĕрĕк йăлана хирĕç кĕрешме вăхăт çитнĕ.

Хăшпĕр комсомолĕцсем путсĕр сăмахсем каласа хĕрарăмсене кўрентерисем те пулаççĕ-ха. Çавна хирĕç вирлĕ кĕрешÿ кирлĕ.

Йĕ тата халĕ те пĕтĕмпех пĕтсе çитмен авалхи тискер йăлана хирĕç кĕрешессине илер. Йанкурасри комсорг пулнă Прокопий Сидăрăв тата Килтешри комсорг пулнă Назарăв хĕрарăмсенчен тăрăх ласа, кулса çÿренĕ,—çавăншăн вĕсене комсоргран каларна, вĕсен ĕçĕ хаљ суд аллинче. Анаткасри (Писенер йалсовечĕ, Çеваçтйан Çеменăв комсомолĕц) сысна фермине ĕçлекен А. Н. хĕре çапса пĕтернĕ. Хирлепри комсорг Николайĕв арăмне хĕненĕ. Çаксем ĕнтĕ калама çук ирсĕр те тискер ĕçсем пулса тăраççĕ. Елĕк улпутсем ĕççыннисене, хĕрарăмсене пушшех те çын вырăнне хуман. Асăннă комсомолĕцсем çав улпутсен йăлине ăстан тупнă-ши? Хĕрарăма çын вырăнне хуман çынсене хирĕç, вĕсем йамне пăхмасăр, пит вирлĕ кĕрешес пулат.

* *

Пирĕн районри комсомол организацийĕ çамрăк хĕрарăмсем хушшинче чылайăх ĕçсем тума пуçларĕ. Анчах, тепĕр хут калатпăр, унпах сахал-ха. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ май ку ĕçе татах вăйлатас пулат. Ку вăл—комсомол организацисен задачи.

С. ДУБИНИН.

ПСÇЛКС Елĕк райкомĕн секретарĕ.

1938 ÇУЛХИ ÇУРАКИ

Акса пĕтернĕ колхозсенче

ЙЕТЕРНЕ. Полянкăри Кирăв йачĕпе тăракан колхоз ака ĕçне вăхăтра вĕçлерĕ. Колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Пурĕ 375 гектартан 355 гектар çине çейалкăпа акнă. Акана кĕске срукра ирттерес ĕçре стахановла йухăма анлăн сарса пыни нумай пулăшрĕ! Салатайĕв сухаçă куллен ĕç нормине 305 процент таран, М. Маслов, Карайĕв, Киçаçĕв колхозниксем сÿрелес нормăна 160-шер процент тултарса ĕçлерĕç. Горелăв тата Кукушкин колхозниксем кашни çейалкăпа 8—9-шер гектар акса пычĕç.

Кирăв йачĕпе тăракан колхоз кăçалхи вăйлă тырпулшăн Тури Ачакри колхозпа ăмăртса ĕçлерĕ. Çуракинче Кирăв йачĕпе тăракан колхоз мала тухрĕ. Хаљ малтан акнă çуртри калчисем пит аван шăтса тухрĕç.

Сăкалăхри „Çĕнĕ йăла" колхоз та акана срукченех пĕтерчĕ. Вĕсем те çуртрисене майăн 4-мĕшĕнче акса пĕтерчĕç.

Вырăс Чураш йалсоветне кĕрекен „Мартăн 8-мĕшĕ", „Ленин çулĕ" колхозсем тата Çĕнĕ Типкешри Максим Горький йачĕпе тăракан, Улăх Шăматри „Колхозник йулташĕ" колхозсем те çуракине пысăк пахалăхпа иртерчĕç.

Н. Цветков.

ТРАК. (Телефонпа). Майăн 7-мĕшне районри 100 колхозран 21 колхозра тĕштырăсене акса пĕтерчĕç. Пурĕ 4.941 гектар, вăл шутран 2.386 гектар тĕштырăсене çейăлкăсемпе, 2.323 гектар çинче йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акнă. Районри колхозсенче 99 çейăлкă, анчах хăшпĕр колхозсенче çейăлкăсемпе туллин усă курни çук. Акă, Алпахтинă йалсоветне кĕрекен „Партизан", Пшонкă йалсоветне кĕрекен „Правда", Трак йалсоветне кĕрекен „Осоавиахим" колхозсенче çейăлкăсем пур çинчех тĕштырăсене алăпа акаççĕ.

М. Иванов.

Йĕтĕне мульчировани тăвасси çинчен

Йĕтĕн акнă лаптăка мульчировани тусан, унăн тухăçлăхне ÿстерминне аслă лăхпа тĕпчев учрежденисен, хата-лабораторисен, çавăн пекех тата стахановла звеносен опычĕсем лайăх çирĕплетсе пачĕç. Мульчировани туни йĕтĕн тухăçлăхне 20—30 процент, йĕтĕн пахалăхне 2—3 номĕра ситиччен ÿстерни—агротехникăн çав майĕпе сарлакан усă курмали çине кăтартса парат.

Акнă йĕтĕн лаптăкĕ çине сармали йапаласенчен чи лайăххи вĕтетнĕ торф пулса тăрат. Малтанхи çул йĕтĕн çине сарнă торф тепĕр çулхине çĕре çемçетмели, лайăх йапала пулат.

Торф çук йе çитмен çĕрте çумкурăк вăррисенчен тасатнă тата тураса вĕтетнĕ улăмпа та усă курма пулат. Иртнĕ çулта Спасск районĕнчи „Заря коммунизма" колхозра кашни гектар пуçне 3—4 тоннă туранă улăм илсе,—мульчировани туни йĕтĕн тухăçлăхне 31 процент ÿстернĕ. Облăçри сăнав станцийĕ икĕ çулхи опычĕ мульчировани тăвас ĕçре улăм торфран кайа йулманнине кăтартса пачĕ. Анчах кун пек чухне çакна шута илес пулат: сиверех тата нÿрлĕ пулнă çуркунне йĕтĕн акнă лаптăк çине сантиметр çурă ытларах сарнă пулсан, улăм торфран чылай кайарах тăрат.

Йĕтĕне торфпа йе улăмпа витессине тĕрĕс тунă пулсан, çанталăк кирек мĕнле тăрсан та çĕр сийĕнче температура пĕр пек, çĕр айĕнчи нÿрлĕхе аван сыхласа тăрат.

Çавна май минераллă удобренисем йĕтĕне ÿсме вăйлăн пулăшаççĕ. 1936 çулта Облăçри сăнав станцинче минераллă удобрени хăй тĕллĕн йĕтĕн тухăçлăхне—22 процент, мульчировани туни—50 процент, мульчированине минераллă удобренисем пĕрле 83 процент ÿстернĕ.

Йĕтĕне мульчировани тунă чухне çаксене пăхăнса ĕçлес пулат. Чи малтанах торф, улăм, йе тата урăх йапалан йĕтĕн акнă лаптăк çине саракăн сийĕ 1—1,5 сантиметр хулăмĕш пулмала. 40 процентлă нÿрлĕ торф пулсан, кашни гектар çине 30—40 тоннă, макли пулсан—20 тоннăран мала мар, тураса вĕтетнĕ улăм—4 тоннă илсе сармала.

Сармали йапаласене малтан тĕплĕн хатĕрлени кирлĕ. Торфа вĕтетмелĕ, улăма малтан çумкурăк вăррисенчен силлесе тасатмала, унтан ана турамала. (Туранă улăм тăршшĕ 5—10 сантиметр пулмала). Хырлă вăрмантан йĕтĕн лаптăк çине сарма хатĕрленĕ йапаласене хыр йĕкелĕсенчен тасатас пулат.

Йĕтĕне типĕ çанталăкра улăмпа мульчировани тунă пулсан, ун пек чухне вара сарнă улăма, çил вĕçтерсе ан кайтăр тесе, кăштах йĕпетмеле. Йĕтĕн акнă лаптăк çине саракан торфа йе улăма пĕр тикĕс сарса тухас пулат.

А. КРЕСТЬЯНИНАВĂ.— Горький Облăçĕнчи уйхир станции аслăлăх сотрудникĕ.

(„Советская деревня" хаçатран).

Йĕтĕн акасси кайа йулат

Хĕрлĕ Чутай (телефонпа). Майăн 6-мĕшне районĕпе 3.744 гектар тĕштырă акса, плана 38 процент тултарнă. Районри 60 колхозран 15 колхоз тĕштырăсене акса пĕтернĕ. „Правда", „За урожай", „Красный остров" колхозсем çуракине кĕске срукра, пысăк пахалăхпа иртерчĕç.

Çав хушăрах районра йĕтĕн акас тата махоркă лартас ĕçсем кайа йулса пыраççĕ. Районĕпе 250 гектар йĕтĕн акмала, хаљ 4 гектар çеç акнă, 59 гектар махоркă лартмала, 5 гектар кăна лартнă-ха.

Райçĕрĕç пайĕн йĕтĕн акассипе махоркă лартас йенĕпе колхозсене куллен йертсе пымала, пулăшмала.

И. Çидоркин.

Ăмăртура мала тухнă

Çĕнĕ Кипеçри (Пăтăрйел р.) „Трактăр" колхоз майăн 3-мĕшĕнче тĕштырăсене акса пĕтерчĕ. Çураки вăхăтĕнче колхозниксем ăмăртса ĕçленипе ĕç нормисене мтлашшипех тултарса пычĕç. Акă, Н. Творогăв колхозник плугпа 2,16 гектар таран, С. Петров кулленех 1,80 гектар сухаласа пынă. В. Андрейĕвпа И. Антонов колхозниксем çейăлкăсемпе 7,50-шер гектар акнă.

Колхозри йаровизатăр Андрейĕв вăрлăхсене пĕтĕмпех йаровизациленĕ.

„Трактăр" колхозпа „Çĕнтерÿ" колхоз хушшинче пыракан ăмăртура „Трактăр" колхоз малти вырăна тухрĕ. Пахалăх комиççи хаклани тăрăх, ĕç пахалăхĕ питĕ аван.

Н. Квасов.

Комсомол организацине пулăшу кирлĕ

(Шупашкарти çăкăр савăчĕ)

Шурă çăкăр пĕçерекен цехра ĕçлекен Љуба Лукина йулташпа Иван Попов маçтăра савăтра пурте пĕлеççĕ. Вĕсем çинчен: „Чи малта, пример кăтартса ĕçлекенсем вĕсем" теççĕ рабочисем.

Иван Попов йулташ йертсе пыракан бригадă кашни уйăхрах плана 110—117 процент таран тултарат. Вăл бригадă кашни куллен 450 килограма йахăн çăкăр пĕçерсе кăларат. Ытти çменасемпе бригадăсем II—III-мĕш суртлă çăкăр пĕçерсе кăлараççĕ пулсан, ку бригадă йаланах пĕрремĕш суртлă çăкăр пĕçерет, нихăçан та брак кăларман. Кашни куллен çăкăр пĕçерессипе виçшер оборот тăват.

Љуба Лукина йулташ подручнăй пулса ĕçлет. Малтан ученик шутĕнче пулнă. Халĕ вăл нормăна йаланах 115—125 процентшар тултарса ĕçлет, брак пулмасть. Хайĕн хастарлăхĕпе, дисциплинăна лайăх тытнипе ытти рабочисене пример кăтартат. Вăлах çтена хаçачĕн редколлеги членĕ.

Поповпа Лукина йулташсем иккĕшĕ те çамрăк комсомолĕцсем. Комсомола кăçал кăна кĕнĕ. Савăта килсе кĕни те ытла нумайах пулмасть. Кĕске вăхăт хушшинче вĕсем квалификацилĕ рабочисем пулчĕç.

Анчах комсомол организацийĕ çаксен ыра опычĕсене мĕнле сарса пырать-ха? Пачах çителĕксĕр, темеле. Организаци ку ыйтăва пĕр пухура та сÿтсе-йавман. Çавăнпа вăл вĕсене татах та лайăхрах ĕçлеме мĕн чăрмантарса пынине пĕлеймест, вĕсем мĕнле пурăннипе интересленмен. Вĕсен опычĕсене ытти рабочисем хушшине сарман пирки те ĕнтĕ савăтра стахановла йухăм начар сарăлса пырат. Комсорг Трофимăв калана тăрăх, 11 комсомолĕцрăн виççĕшĕ кăна стахановĕцсем шутланаççĕ.

Çамрăксене комсомол ретне йавăçтарас тĕлĕшпе те комсомол организаци çителĕксĕр ĕçлет. Кăçал пĕтĕмпе 3 çынна çеç комсомола илнĕ. Сăлтавĕ çакăнта: çамрăксене пухусене сахал йавăçтараççĕ, вĕсем хушшинче массăлă воçпитани ĕçне сарса пымаççĕ. Акă, савăтра хĕрлĕ кĕтес пур, анчах ахалех ларат. Организациленĕ кружоксем ĕçлемеççĕ. Пĕрле пухăнса хаçат-журнал вулассине, калаçусем ирттерессине туса пымаççĕ. Политкружоксем ĕçлемеççĕ. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме организациленĕ кружоксене те çамрăксем вĕренме питĕ сахал çÿреççĕ.

Комсорг ĕçе йеркелеме пĕлеймест, унăн ĕçри опыт, практикă сахал. Вăл хăй те комсомола 6 уйăх кайала çеç кĕнĕ. Комсомолĕцсем те пурте пекех çамрăксем, нумайĕшĕ кăçал çеç комсомола кĕнĕ. Анчах организацине комсомол хула комитечĕ сахал пулăшат.

Хар. Лисин.

Ленинградра тĕнчери чи пысăк „Иосиф Сталин" йатлă пăрçĕмĕрен туса пĕтереççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Иосиф Сталин" пăрçĕмĕрен естакадăсем патĕнче.

М. Редкинпа Н. Йанов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Куракçем акас ĕç кайа йулнă

Патăрйел. Майăн 9-мĕшĕ, (телефон тăрăх). Анат Туçари „Çăлтăр" колхоз тĕштырăсене районра пуринчен малтан акса пĕтерчĕ. Çуракине ăнăçулăн иртерекен колхозсен йышĕ кунран-кунах нумайланса пырат.

Пайанхи куна „Трактăр", „Комбайн", „Искра", „Правда" колхозсем çураки планне пур культурăсем тăрăх та тултарчĕç.

Енерхи куна районĕпе 30 колхозра пĕрчĕлĕ тырăсене акса пĕтерчĕç. Анчах, çав хушăрах çураки ĕçĕнче кайа йулса пыракан колхозсем те пур. Акă, Водопйанăв йачĕпе тăракан колхоз (председателĕ Коновалăв) тулă 48 гектар акас вырăнне 27 гектар, сĕлĕ 68 гектар вырăнне 22 гектар çеç акнă. Утăлăх викăна чи малтанах акмала пулнă, анчах пайанхи куна çитсе те акман.

Сталин йачĕпе тăракан колхозăн (председателĕ Ираскин) пăрçа йышши культурăсем 122 гектар, вăл шутран утăлăх викă 50 гектар акмала пулсан, вĕсене халĕ те акман.

— „Епĕ викă акмали план пуррине пĕлмен те, бригадирсем пĕлеççĕ пулĕ, тата вăрлăх та çук",— тесе пĕр вăтанмасăр ответлет Ираскин.

Районра пăрçа йышши культурăсем, уйрăмăнах утăлăх викă акасси калама çук кайа йулса пырат. Утăлăх викă акассине ытла та кайа хăварни,—вăл кĕрхи ăка вăхăтĕнче пысăк чăрмав пулса тăрат. Патăрйелсен çакна манас пулмасть.

Н. Пушкин.

Колхозсен уй-хирĕнче

Ишлей. Майăн 7-мĕшне 3.538 гектар çинче тĕштыра, 660 гектар çинче пĕр çул ÿсекен куракçем акнă. Енер майăн 9-мĕшĕнче Ишекри Сталин йачĕпе тăракан тата „Правда" колхозсем тĕштырăсене акса пĕтерчĕç.

„Чăваш Коммунĕ" колхозра агротехникăла ĕçсене аван пурнăçласа пыраççĕ. Колхозри 2 бригадăра та кăçал пĕтĕм лаптăк çине йаровизациленĕ, вутпуççирен тасатнă вăрлăхсемпе акса хăварассишĕн кĕрешеççĕ. Çавăнпа пĕрлех нитрагинпа тата азотогенпа лайăх уса курнă.

К. Федорăв.

*

Елĕк. (Телефонпа). Çураки ĕçĕнче Писĕпри „Рой", Йунтапари „Алмас", Вырăс Сурăмри „Доброволец" колхозсем малта пыраççĕ. Вĕсем майăн 11-мĕшне тĕштырăсене пĕтĕмпех акса пĕтереççĕ.

Çуракинче стахановла ĕçлекенсем хутшăнсах пыраççĕ. Вĕсем ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартаççĕ. Акă, Писĕпри „Рой" колхозра Антипăв тата Капитонăв колхозниксем плугпа нормă тăрăх 1,5 гектар сухалас вырăнне 2—3-шер гектар сухалаççĕ. Павлăвпа Трофимăв колхозниксем кунне 4-шер гектар сÿрелеççĕ.

Майăн 7-мĕшне районĕпе 6.930 гектар тĕштырă акса, плана 48 процент тултарнă. Йаровизациленĕ тата вутпуççирен тасатнă вăрлăхсемпе 5 пин гектар ытларах акнă. 170 гектар çинче лартмалăх çĕрулми вăрлăхне йаровизациленĕ.

И. Весновский.

Лайăх çулйĕршĕн

Епĕр, Хурйи Кăкшăмри (Вăрнар р.) „Красноармеец" колхозри колхозниксем, çак кунсенче хамăра уйăрса панă 3 километр тăршĕ çул çинче çурхи шыв çĕмĕрсе кайнă вырăнсене тата кĕперсене йусаса тухрăмăр. Путăк-шăтăксене пĕтĕмпех тикĕслесе пĕтертĕмĕр. Халĕ ĕнтĕ автомашинăсем çÿреме çулсем лайăх.

Анчах та хăшпĕр колхозсем çулйĕре йусасси çинчен шухăшламаççĕ те. Акă, Чăлăм Кăкшăмри Сталин йачĕпе тăракан колхоз тата Нурăсри „Искра" колхоз хăйсене уйăрса панă участкăсене йусамаççĕ. Вĕсен участкисем çинче тем чухлĕ путăк-шăтăк. Епĕр вĕсене халăх ĕçлеме тытăнма чĕнетпĕр.

Н. Ефимăв.

Импери урамĕ ăçта илсе пырат

Парижри куллен тухса тăракан „Лумйер" хаçат корреспондентки Дениз Тория пĕр уйăх Италире пурăннă. Айаларах епĕр çав корреспонденткăн неаполитанĕцсен шухăш-кăмăлĕсем çинчен „Лумйер" хаçатра каларнă статйисене пичетлетпĕр.

* * *

Пĕр каçхине епĕ паллана итальйанĕцпа ахаљ халăхсем çÿрекен тратторинче ларма шут тытрăм. Кунта час-часах Испание ăсатакан салтаксене тĕлпулма пулат. Çак каçхине сĕтелсене пурне те пекех салтаксем йышăннăччĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ выльатчĕç. Йĕри таврах сасăсем кĕрлесе тăратчĕç.

Пирĕннипе йунашар сĕтел хушшинчи салтаксен ушкăнĕ нумайах пулмасть Испанирен таврăннă капрал каласа панине итлетчĕ. Капралĕ стакан хыççăн стакан ерех ĕçет. Вăл питĕ хытă калаçса, çитес кунсенчех Испанийе ăсатасса кĕтекен салтаксене пысăкрах вырăна куçарасси çинчен ĕнентерет. Анчах унăн сăмахĕсем салтаксен кăмăлне каймаççĕ пулмала.

— Испани çĕрне итальйанĕцсен виллисемпе сахал çемçетрĕмĕр епĕр, татах та удобрени хушмала пулат пулмала,— хушса хучĕ çурма сасăпа ушкăнта ларакансенчен пĕри, пĕр чарăнмасăр чĕлĕм туртаканскер.

— Анчах сыхланăр, — тет капрал, чĕлĕмлĕ салтак сăмахне илтмен пек пулса. — Салтаксем хушшинче агитаци саракансем нумай. Акă ытлĕр нумайах та пулмасть-ха мĕн пулса иртрĕ. Пĕрреччен епĕ пĕр салтака шанчăксăр тесе шутларăм. Çĕрле епĕ ăна ухтарса пăхрăм та, ун патĕнче вăрçа хирĕç, фашисăма хирĕç листовкăсем тупрăм. Вара вăл, уççăнах курăнса тăракан айăпĕсене пытарма май çуккине курсан, кăшкăрса пăрахрĕ:

— Çапла, епĕ — фашисăма хирĕç, епĕ кураймастăп фашисла ÿкен-тăрансене тата епĕ пĕччен çеç мар, пĕтĕм халăх!

— Каласа пар хăвăнпа пĕрле ĕçлекенсене, вара сана персе вĕлерместпĕр, — сĕнтĕм епĕ ăна. Анчах мĕн тесе шутлатăр-ха есĕр? Вăл тÿрленсе тăрса ман йенеле сурчĕ те, çапла каласа хучĕ: — „Епĕ предатĕл мар, нимĕнле йăпатупа та, нимĕнле хăратупа та есĕр мана хамăн йулташсене тытса партараймăр. Антив, фашисла сволăч пĕлсе татăр"... Анчах вăл каласа пĕтерме ĕлкĕреймерĕ. Унăн хырăмне зарйад пырса кĕчĕ...

Итлекенсем шурса кайнă.

— Тата вырăнти халăхсенчен те сыхланăр, — малала тăсат хăйĕн вĕрентÿне капрал, унăн сăмахĕсем хăй ĕмĕтленнĕ пек мар, пĕтĕмпех урăхла шухăш кĕртнине сисмесĕрех. — Халăх пире кураймасть, анчах епĕр ăна хамăра пăхăнтарса тăма пĕлетпĕр.

Капрал часах ÿсĕрĕлсе çитет те, урисене аран-аран сĕтĕрсе тухса кайат.

Епĕр чĕлĕмлĕ салтакпа интересленте-мĕр. Вăл пире нумай йапала çинчен каласа парассăн туйăнчĕ. Вара епĕр сыхланарах сăмах пуçласа йатăмăр унпа.

Вăл Абиссинири пĕтĕм кампанийе туса иртернĕ тата нумайах пулмасть Испанирен таврăннă пулнă.

— Епĕ вăрçа хăнăхса çитрĕм ĕнтĕ. Мĕн тăвас-ха ман Италире, — тет вăл, — кунта мана пурте кăмăла каймасть: хура кĕпелисем те (чернорубашечники), çынран мăшкăланисем те. А лере — вăрçă, çурĕ пĕрех мар-и ăçта вилсен те?

— Испанире итальйанĕцсем нумай-и? — асăрханарах ыйтатпăр епĕр унран. Анчах асăрханни вырăнсăр. Фашиссем çинчен вăл питĕ хайар сăмахсем каларса йарат.

— Пайан есĕр портра, шурă сăрпа сăрланă хĕрлĕ хĕреслĕ пăрахут куртăр-и? — ыйтат вăл çавăнтах пиртен. Ответне кĕтсе тăмасăрах тата малала калат:

— Вăл пăрахут çине вĕт пĕтĕмпех салтаксем тулнăччĕ. Вĕсене вăрттăн ăсатрĕç. Халăх вĕт вăл вăрçа хирĕç. Иулашки вăхăтра çеç 30 пин çын ăсатрĕç.

Халăха хăратса пĕтернĕ. Вăл хирĕç тăма пултараймасть-ха. Пĕтĕм Неапоьљ тăрăх „пасквинацăсем" салатаççĕ, вĕсем халăхăн шухăш-кăмăлĕ мĕнлине кăтартса параççĕ.

Есĕр „пасквинадă" мĕнне пĕлетĕр-и? Елĕк Римăн икĕ вĕçĕнче икĕ статуйă — Марфори тата Паскино статуйсем тăнă, теççĕ. Папăсем пусмăрланине тÿсеймесĕр пурăнакансем хăйсен хирĕçÿне пĕлтерме çав скульптурăсемпе усă курнă.

Кашни ирхине Марфори скульптури патĕнче ыйту çырса панă хут тупăннă, тепĕр ирхине вара Римра пурăнакансем çав ыйтăва хирĕç ответ кĕтнĕ, ответне Паскино скульптури патне вăрттăн хунă. Ответсем панăшăн кăмăлсăр пулнă. Çакăнтан тухса кайнă „пасквинадă" йачĕ.

Епĕ кунта çавнашкал „пасквинадăсем" илтрĕм унта лайăх шухăшласа та кăларайас çук.

Салтаксене малтан ултавпа илсе кайачĕç. Кунне 50 лир укçа пама пулачĕç. Нумайĕшĕ çавăншăн çеç кайнă, вырăна çитсен пама пулнă 50 лир çинчен сăмах калама та хăйаймала мар. Хаљ ĕç урăхла. Пире çынна çиме вĕрентсе çитерчĕç ĕнтĕ. Аддис-Аббебăра Грацианине вĕлерме тăни çинчен сăмах сарăлнă хыççăн, мĕн пулнине пĕлесчĕ есĕр. Хĕрарăмсен, стариксен, ачасен вилисенчен чăн-чăн ту туса хучĕç. Кунĕн-çĕрĕн пусрĕç халăха. Хаљ ĕнтĕ Испанире мирлĕ халăха вĕлереççĕ. Йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

Анчах халăх фашисла режима кураймасть. Уйрăмăнах Испанире вăрçă пынине пур çĕрте те кураймаççĕ.

Неапольте çакăн пек йурă сарнă:

Пусть пошлют меня на каторгу,
Но правду я скажу —
Чернорубашечников не выношу.

Пĕлетĕр-и — вăл вĕт халăх сасси! Акă Муссолини çинчен калакан сăмахсене итлĕр-ха.

Импери урамĕ ăçта илсе пырат? — ыйтат Марфори. — Италин ишĕлĕвĕ патне, — ответлет Паскино.

—Мĕншĕн Муссолини Предаппиора çуралнă? — Италийе çаратмали мел тупанма (сăмахсен вăййи) „преда" — çаратту, тупăш, тени пулат.

• • •

Тепĕр каçхине епĕ чылайăх çирĕп пурăнакан паллана çын çемйинче пултăм. Унта та çавнашкал „пасквинадăсем" çинчен калаçаççĕ.

— Мĕншĕн Муссолинине Бенито теççе чĕнеççĕ?

— Мĕншĕн тесен, халăх вăл лайăхлăхпа куçран çухаласса кĕтет (бен-ито итальи чĕлхипе — лайăххăн кайтăр, урăхла каласан, çухалтăр тени пулат).

— Ерех тăвасси хăçан чарăнат? — Дуче вилнĕ хыççăн, мĕншĕн тесен унчух пĕр кун хушшинче 40 мĕлйун бутылкă ĕçсе йараççĕ.

Халăх хушшинчи çынсемпе тĕлпулнă çĕрте, пур çĕрте те, епĕ пĕр йапала çеç — çĕршыва чухăнлăх патне илсе çитернĕ халăхи йĕркене кураймасăр тăнине çеç куртăм. Халлĕхе халăх хăйĕн кураймаллăхне листовкăсемпе, „пасквинадăсемпе" вăрттăн йе уççăнах пулса иртекен демонстрацисенче çеç палăртат. Анчах хирĕçÿ ÿссе, сарăлса пырат.

— Неапольте пуçланассине епĕ шанса пĕр çуртра восстани ăçта пуçланнисене уççăнах сÿтсе-йавнине илтрĕм.

— Неапольте пуçланассине епĕ шанса тăратăп, — терĕ вĕсенчен пĕри. Неапоьљ революцилĕ йăласемпе пуйан. Пирĕн халăх халлĕхе тÿлет çеç-ха, анчах çитĕ вăхăт, ун чухне вăл парса татĕ. Йулашки сăмаха халĕ каламан-ха...

К

Террор çĕршывĕнче

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен Германире пулнă посол ывăлĕн—Вилйам Додд статйи

Америкăри „Чемпион“ журналта Вилйам Додд çырнă „Террор çĕршывĕнче“ йатлă статйана пичетлесе кăларнă. Вилйам Додд — Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен Германири послĕ пулнă çынăн ывăлĕ — чылай çул хушши Германире пурăннă. Халĕ вăл „Америкăри миршĕн тата демократишĕн кĕрешекен Литăра“ активлă ĕçлет. Статйа, автăр сăмахĕсем тăрăх, Виççĕмĕш империн картинине пĕтĕмĕшпех ӳсататса параймаст, çапах та фашисла Германири хĕрарăмсен, çамрăксен тата интеллигенции пурнăçĕнчи хăш-пĕр уйрăм сăнсене кăтартса парат.

Виççĕмĕш империнчи хĕрарăмсен пурнăçĕ çинчен автăр çапла çырат:

Гитлĕрла Германире хĕрарăма ачасем çуратмали тата кухнăа тарçи пулмали вырăн панă. Фашисла философи тăрăх, çак обйазăншăçсене государствăшăн тумала. Професăр Роберт Бредм — Америкăри паллă учонăй — тӳррĕн калань тăрăх „фашиссем, вĕсем хĕрарăм çине, хресчен хăйĕн ĕни çине пăхнă пекех пăхнипе мухтанаççĕ“. Хĕрарăмсем вĕсен прислугă, стенографисткă тата пиҫĕ сайра хутра çеç промышлĕннăçри работницă пулса ĕçлеме пултараççĕ. Германи фашисăмĕн тĕн тĕллевĕ — хĕрарăма арçын тума пултаракан ĕçсенчен пурин чен те йалан лăхах кăларса йарасси. Çăпнипе, ĕççĕрлĕхе пăртаксă чакарни предприйатисенче хĕрарăмсем вырăнне арçынсене лартнипе çеç пулат те ĕнтĕ. Хĕрарăм тĕлĕшĕнче Гитлĕр теорийĕ сак принципсенчен тухса тăрат: хĕрарăм арçын тарçи пулат: арçын государствă тарçи пулат: государствă аслă пулмала: пур аслă государствăсем те ĕç çинче тытăнса тăраççĕ. Çакăнтан вара, ĕç лагĕрĕсем тума кирлĕ, тесе вывăд тăваççĕ. Вăл лагăрсенче штурмовиксем алла рычак тытса вăрçă валли тĕрлĕрен „общĕствăлă“ ĕçсем тутараççĕ. Анчах çак вăл теори çеç мар, вăл тата фашисла Германин практикăлă ĕçĕ пулса тăрат, тет автăр. Германири ачасем 10 çула çитсенех, йатарласа тунă тĕрлĕрен организацисем пулăшнипе, фашисла контролл аллине лекеççĕ. Çав организацисенче, хĕрачасене 10 çултан пуçласа 21 çула çитиччен „воспитани“ панине контроллесе тăракансксерсенче, дисциплинăпа пурнăç йĕрки Германири ĕç лагĕрĕсенчи çамрăксен гитлĕрла организацинчи пекех пулса пырат. Хĕрачасене те çар ĕçне арçын ачасенчен кайа мар вĕрентеççĕ. Германири хĕрачасен лигин членĕсем çар формилĕ тум тăхăнса çӳреççĕ, маршировкăсем тăваççĕ, муштровкăпа вĕренеççĕ, çула вĕсем çар ĕçне лагĕрсенче вĕренеççĕ. 1936 çултан пуçласа пур хĕрачасем валли те ирĕксĕр ĕç повиннăçĕ тунă.

Малала Додд рабочисен пурнăçĕ çинчен çырат. Власра Гитлĕр пуç пулса тăнă хыççăн, партисене çеç мар, профсойузсене те пурне те саккун йышăнмаст, тесе пĕлтернĕ. Профсойузсем вырăнне капиталиссен интересне хӳтлекен фашисла „Ĕç фрончĕ“ тунă. „Ĕç фрончĕ пулăшнипе, тет Додд, промышлĕннăçăн пысăк хуçисем ĕçукçи пысăкĕшне, ĕçкунĕн тăршшĕне, ĕç условийĕсене хăйсен ирĕкĕпе тăваççĕ тата рабочисен пурнăçне хуçасемшĕн усăлă туса йĕркелеççĕ. Государствă çистемине финанс магначĕсен тата пулттра помещиксен прависемпе интересĕсене пурне те хӳтлемеле туса йĕркеленĕ. Германири пуç пулса тăракансем пурте вăрçă хатĕрĕсене вăйлатма тăрăшаççĕ. Рабочисен пурнăç условине начарлатса, капиталиссем валли услам тăваççĕ. Пысăк çар машинисем тумали тăкаксене пĕтĕмпех рабочисен ĕнси çине тийеççĕ. Власра Гитлĕр пуç пулса тăнăранпа рабочисем тавар илме пултарасси палăрмалах чакнă. Хăшпĕр чух, фашисла правитĕлствă тунă картăчкă нормипчен ытларах продуктăсем пулсан та, халăхран нумайĕшĕ укçа çуккипе çав продуктăсене илоймест. Пултра капиталиссемпе фашисла бӳрократисĕр пуçне, халăхăн вăтам çийĕсем çĕршывра вăрçăлă економикă тунипе пурте хурлăх тӳсеççĕ. Çавăнпа та, пĕр чарăнусăр террор пулнипе пăхмасăр, фашисла йĕркепе хирĕçни ытларах та ытларах ӳссе пырат. Çак хирĕçӳ Испанире фашисла интервенци тунипе тата ытларах ӳсет. Германи тăрăх Испани пăлхавçисене Германи фашисĕсем пулăшнипе хирĕçле протес хумĕ пуçланса кайнă.

Германири интеллигенци пурнăçĕ те çавнашкалах тӳсме çук йапăх. Профессăрсем, доктăрсем, йуриссем тата аслăлăх тĕнчин ытти представитĕлĕсем те, ĕç тупас тесен, таса арийцăсем пулмала çеç мар, тата çавăнпа пĕрлех фашисăм йĕркине усçăнах пропагандăлакансем пулмала. Аслă шкулсемпе коллежсен учебникĕсене ачасене шовинисăмла вĕрентмеле туса пĕтĕмпех урăхлатса пĕтернĕ. Радио, хаçатсем, театрсем, кино, аслăлăх пĕтĕмпех фашисăмлă государствă службинче тăраççĕ. Театр „пиҫĕ ирсĕр искусствă патне çити анса ларнă. Чи лайăх тата малта пыракан артиссене ссылка йарса пĕтернĕ. Германири тата пĕтĕм тĕнчери классикăлă литературăна вăрçăлă националисăма пропагандăламала майлă туса урăхлатса пĕтернĕ. Пичет пĕтĕмпех Геббелс аллинче тăрат тата ăна мĕнле чĕлхепе каласма приказ панă, çавăн пек чĕлхепе çеç каласат. Хаçатсен чĕлхисем пурин те пĕр пек, çавăнпа та хал Германире хăш хаçат йертсе пыракан хаçат пулнине калама та йавăр. Нумай лайăх журналсене хупса лартнă, йе вĕсем панкрутланса йулнă. Власра Гитлĕр пуç пулса тăма тытăннăранпа вулакансен хисепĕ çурри ытла чакнă. Германири малта пыракан литературăна, искусствăн, живописĕн чи лайăх произведенийĕсене фашисла варвăрсем пĕтĕмпех пĕтереççĕ. Аслăлăх тата кулътурăн чи лайăх представитĕлĕсем Германири тĕрмесемпе концентрацилĕ лагĕрсенче пăчланаççĕ. Германире, — власра Гитлĕр пуç пулса тăриччен Йевропăри малта пыракан тата кулътурăлă çĕршывсенчен пĕри шутланнă çĕршывра, мĕлйуншар çынсем ĕççĕр тата выçă тăрса йулнă, хресченсем йухăнса пĕтнĕ, вуншар пин çынсене хупса лартнă, пĕр чарăнусăр террор пулса пырат, пиншер çынсем хăйсене хăйсем вĕлереççĕ, — çаксем ĕнтĕ Германире фашиссем пуç пулса тăнин результачĕсем.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Фашиссен самолочĕсем бомбă пăрахса çĕмĕрнĕ Барçелонă хулинчи çурт.

(Сойузфото).

Вылăх-чĕрлĕх сутăн илме йармăркăсем организацилесси тата вĕсене иртермели сруксем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Економсовет вылăх-чĕрлĕх сутăн илес тĕлĕшпе тумали ĕçсем çинчен йышăннă постановленипе килĕшӳлĕн, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Кăçалхи майăн 15-мĕшĕнчен пуçласа вылăх-чĕрлĕх сутăп илес тĕлĕшпе йатарласа йармăркăсем организацилес, вĕсене çак сруксенче тата çак пунктсенче иртерес:

Елĕк районĕнчи Вылă пасарĕ—майăн 19, 20, 21-мĕшĕсенче, Çĕрпӳ — ийунĕн 2, 3, 4-мĕшĕсенче, Вăрмар районĕнчи Кавалта—ийунĕн 7, 8, 9-мĕшĕсенче, Йелчĕк—ийунĕн 12, 13, 14-мĕшĕсенче, Патăрйел — майăн 18, 19, 20-мĕшĕсенче, Улатăр—ийунĕн 1, 2, 3-мĕшĕсенче, Пăрачкав—ийунĕн 3, 4, 5-мĕшĕсенче, Хĕрлĕ Чутай—ийунĕн 7, 8, 9-мĕшĕсенче, Вăрнар районĕнчи Нурăсра—майăн 24, 25, 26-мĕшĕсенче, Канаш—ийунĕн 12, 13, 14-мĕшĕсенче, Шупашкар — майăн 27, 28, 29, 30-мĕшĕсенче.

2. Йармăркăсенче вылăх-чĕрлĕх сутăн илме çак организацисене ирĕк парас: вылăх-чĕрлĕх хатĕрлев кантурне тата потребкооперацине. Вылăх-чĕрлĕх хатĕрлевĕн Чăваш кантурĕн управлайушчине Лобачов йулташа тата Чăвашсойуз президиумĕн председателне Л. С. Чернов йулташа вылăх-чĕрлĕх сутакан колхозсене, колхозниксене тата ĕççынни йединоличниксене валли суту-илӳ организацилеме кирлĕ тавăрсене нумай кӳрсе килессине пурнăçа кĕртме хушас.

3. Пĕр-пĕрне тупăшни пулмала мар тăвас шутпа, потребкооперацине тата вылăх-чĕрлĕх хатĕрлев кантурне йармăркăсенче вылăх илекен агентсене çакăн чухлĕ хисеппе тытма ирĕк парас:

	Чăвашсойуз	Вылăх-чĕрлĕх хатĕрлев кантурĕ
Вылă пасарĕ	4	4
Çĕрпӳ	5	5
Кавал	4	4
Йелчĕк	3	3
Патăрйел	4	4
Улатăр	5	5
Пăрачкав	5	5
Хĕрлĕ Чутай	2	2
Нурăс	2	2
Канаш	3	3
Шупашкар	3	3

Кашни йармăркăрах вылăх-чĕрлĕх хатĕрлев кантурĕн вылăх илмели пĕрер пункт организацилемеле.

4. Суту-илӳ тăвакан организацисене (Чăвашторг, Чăвашсойуз, Вăрманпродторг, Коопинсойуз, Промсойуз, Аптекоуправлени, Книготорг) йармăркăсем ирттернĕ çĕре активлă хутшăнса ĕçлеме тата йармăркăсем пулнă вăхăта валли йатарласа куçса çӳрекен ларйоксемпе палаткăсем организацилесе, куллен кирлĕ, куллен ыйтакан таварсемпе санитари тата гигийенă таварĕсемпе культтаварсемпе анлăн суту-илӳ тăвассине, сăкăрсемпе, булкăсемпе тата кондитĕр таварĕсемпе суту-илӳ тăвассине пурнăçа кĕртме хушас.

5. Райĕçтăвкомсене тата хула совечĕсене пасар площчĕдĕсене туса çитерме, вĕсене кирлĕ пек йĕркелесе лартма тата пасар тарасисем хатĕрлесе пама хушас.

6. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне йармăркăсенче ветеринари йĕнĕпе пулăшассине тата вылăхсем сутăн илнĕ чухне ветеринари контролне организацилеме хушас.

7. Вылăх сутма догăвăр тупă колхозсене догăвăр шучĕпе вылăх-чĕрлĕх сутма йармăркăсене тухма ирĕк парас.

8. Чăвашсойуза кăçалхи майăн 7-мĕшĕнчен кайа йулмасăр йалпосене укçа пама вĕсем районсем тăрăх йармăркăна хутшăнассин планне Госбанка тăратма хушас.

9. Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариатне кашни йармăркă тата хирăмах суту-илӳ организацисем тăрăх таварçавăрнăш планне палăртса, ăна пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе пырассине пурнăçа кĕртме хушас.

10. Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариатне Чăваш АССР-чи колхозсене, колхозниксене, ĕççынни йединоличниксене йармăркă пуласси çинчен анлăн пĕлтерме тата вĕсем йармăркăна организациленĕ хутшăнассине пурнăçа кĕртме хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ **Ф. Матвейĕв.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхакан **Н. Жукăв.**

Шупашкар хули, 1938 çулти майăн 5-мĕш.

КĔСКЕН

* **Радиоузĕл.** Йӳçкассинчи (Елĕк районĕ) „Социалисăм“ колхозра кăçал радиоузĕл лартрĕç. Унта Ф. Зотикăв радист ĕçлет. Узĕлăн 11 точкă пур.

Й. Прокопйĕв.

* **Вулав çурчĕ—уйра.** Вутланти (Елĕк районĕ) вулав çурчĕ колхозниксемпе пĕрле акана уйа тухрĕ. Избач Камнĕв колхозниксем каннă вăхăтра хаçат-журналсем вуласа парат, патефон калаттарат.

М. К.

* **6 меллиоратăр.** Вăрмар районĕнчи колхоз шкулĕнчи 5 уйăхлăх курсăн меллиораци пайĕнчен 6 çын вĕренсе тухреç. Курсантсем пурте аван вĕренчĕç Вĕсем ĕçлеме колхозсене саланчĕç.

В. Григорйĕв.

* **Футбол вăййи.** Туçири (Çĕрпӳ районĕ) туллимар вăтам шкулта майăн 3-мĕшĕнче футбол вăййи пулса иртрĕ. Вăйăра 1-мĕшпе 2-мĕш командă выляреç. Вăйă 3:0 шутпа 2-мĕш командă çĕнтернипе пĕтрĕ.

Çитес кунсенче 3-мĕшпе 4-мĕш командă выляççĕ.

В. Платонăв.

Хроникă

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **Ф. Н. Филиппăв** йулташа РСФСР Госпланĕ çумĕнчи халăх хуçалăх учочĕн управлени началникĕ пулма çирĕплетнĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Федăр Тимофейĕвич Çеменăв йулташа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителне тата бӳджет пайĕн пуçлăхне лартнă.

Çулсене йусарăмăр

Ишлей. Тивĕш йалĕнчи колхоз кăçалхи çул çулйĕр строителствинче хастарлăн хутшăнса ĕçлет. Йатарласа уйăрнă бригадă йал таврашĕнчи çулсене пурне те йусаса тухрĕ. Унсăр пуçне тата Елĕкпе Шупашкар хушшинчи çулйĕр участкине 2 километр тăршшĕ йусаса, тикĕслесе тухрĕ, 45 кубла метр хăйăр сарчĕ.

Л. Петров, О. Артемйĕв.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Хула Суйлав округĕ № 1 суйлав комиççийĕ пĕлтерни

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Хула Суйлав округĕ № 1 суйлав комиççин адрĕсĕ çапла:

Шупашкар хули, Чувашскайа урам, 24, М. Горкий йачĕпе тăракан шкул. Телефон № 5—11.

Пĕлтерни

Пайан, майăн 10-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Çыхăну çурчĕн клубĕнче хаçат-журналсем саракан уполномочĕннăйсен канашлувĕ пулат. Парти комитечĕсен çекретарĕсен тата парторганизатăрсен уполномочĕннăйсене канашлува вăхăтра пыртармала.

ПСК(б)П Хула Комитечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

НАКАЗ ТАТА ĔÇСЕМ

Шупашкар—республикă столици, Республикăн културăлă центрĕ. Хула совечĕ тата унăн председателĕ пур кунта. Хулара пурăнакансем, вĕсем 18 çул тултарнă пулсан, тăнран тухнисемпе судпа сасăсăр хăварнă çынсемсĕр пуçне, пурте суйлав прави илнĕ. Вăл, суйлавçă, хула советне наказ пама пултарат, пултарат çеç те мар, вăл хăйĕн наказĕсене вичтăвата çул кайалах панă-ха.

— Ну, тата камăн наказсем çумне хушмали пур?—ыйтнă ун чухне пуху председателĕ.

Нумайăн алă çĕкленĕ.

— Хулана.. хăвăрах пĕлеттĕр, Канаш йенчен пырса кĕме çук. Унта...

— Вăл кăна мар,—алă çĕклесе ыйтнă тепĕри, — Заводски урамне пырăр-ха, шурлăхри пек...

— Вăл та кăна мар, — сăмах илтĕннĕ тата алăк патĕнчен,—акă Шупашкар тротуарĕсем вара...

— Тротуар мар-ха, калаçнă пĕр хĕрарăм,—хулана шыв тăратасси, пĕвесем...

— Калăр малала,—тенĕ пуху председателĕ. Çекретарĕ çырса пынă.

Пуху хупăннă. Унтанпа виçĕ-тăватă çул иртнĕ. Кăçалхи 1938 çул кĕрлесе çитнĕ. Май уйăхĕ. Йăвăç та çулçă кăларат. Курăк та йешĕрет.

Шупашкар. Кăнтăр йенĕ. Канаш хули йенчен автобус çулĕ килсе кĕрет.

Сылтăм йенне „тислĕк тăкакан“ вырăнĕ тăрса йулат. Ку пирĕн сăмах мар. Хура тасалăхĕшĕн тăрăшакан çынсен сăмахĕ. Ку вырăна хирĕç пединститут, педучилищă, кооптехникум, общежити. Ан усăр студентсем, кантăка! киревсĕр шăрш çиле май, сирĕн пата сарăлат. Хуларан хĕлкаçипе тасатнă тислĕк çукасиччен йасăрланса выртат.

Симĕс пасар пирки калаçрĕç-калаçрĕç те, халĕ чарăнчĕç-ха ĕнтĕ. Мĕн ара вăл, тепре каласан. Пасар-тăк, пасар. Илес текен, илет, сутас текен сутат. Иртнĕ çул вĕсене валли пĕчĕк площчĕдре торговкă сарса пачĕç. Кĕрсе çӳре, сана—услугă.

Мĕнле пырса кĕрес-ха унта? Вăт ыйту çакăнта та, Шурлăх... ăна, тен, хула советĕнче болотăпа танах мар тесе ăнланĕç. Тислĕкпе пылчăк çăрăнса ларнăран болотăран кăшт тиПĕрех тăнипе танлаштарĕç. Шурлăхпа пылчăк хушшинче уйрăмлăх сахал-çке.

Уншăн мар-ха. Хула совечĕн çак вырăнсене йĕркене кĕртме май çук-ши вара? Калăпăр, хула тулашне, хулана пырса кĕнĕ çĕре, çавнашкал хулана киревсĕр шăршă саракан пӳтсĕрсене кăларса тăкас мар. Симĕс пасарта пухăнса выртакан тасамарлăха çийĕнчех шăлса пухас, унтах çĕрсе выртма парас мар. Вара, хал, хăвăрах лайăх. Хулара сывлăш усăлат.

Халĕ кашни учреждени, организаци, шкул умĕнче културăшăн, тасалăхшăн кĕрешес ыйту тăмалă. Тасалăх—сывлăхăн тĕрекĕ. Апла-тăк, ыйту паллă. Парăр пире тасалăх, уншăн кĕрешĕр! Халĕ çу пуçламĕшĕ. Халĕ ĕнтĕ шăна-пăван пухăнакан вырăнсемпе, епĕр каланă „шурлăхсемпе“ кĕрешмели вăхăт.

Тытăнăр. Хулан тасалăх, културă сăнпитне кăтартăр. Ку кирлĕ те паха ĕç.

ИВ. МОÇЕЙĔВ.

Ертел начар ĕçлени мĕнрен килет

ИШЛЕЙ. Тивĕшри промысла ертелĕн кăçалхи 1-мĕш квартăлта плана тултарма материалсем те, ĕç вăйĕ те çителĕклĕ пулнă. Анчах ертел начар ĕçленĕ. Мĕншĕн-ха апла? Кунта рабочисем хушшинчи ĕçе тĕрĕс организацилемен. Ăмăрту çук, учот йапăх. Ĕçукçи вăхăтра парса пымаççĕ. Колхозсемпе çыхăнса ĕçлемене те ертеле нумай чăрмантарат.

Ертелри култмассăлă ĕç çинчен çакна çеç каламала: ăна туса пымаççĕ. 450 тенкĕ парса илнĕ хуткупăса та çĕмĕрсе пăрахнă. Куншăн ответ тытакан та çук.

Çакăн пек çитменлĕхсем пулнă пирки те ĕнтĕ ертел 1-мĕш квартăл планне тултарман, 42.000 штук чăпта çапмала пулнă пулсан, 19 пин штук çеç çапнă.

Ертелĕн лайăх ĕçлеме условисем пур. Правлени председателĕн Йакăвлĕв йулташăн рабочисем хушшинче ĕçе тĕрĕс организацилемеле.

Н. М. Йашков.

Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн

МЕТРИЧĔСКИ ВИÇЕСЕН ПАЙĔ

пур хуçалăхлă тата суту-илӳ организацийĕсене çакна пĕлтерет:

Тарасасене тата ытти виçмели тĕрлĕрен йапаласене тĕрĕслесе клеме пуснăшăн укçа тӳлени айалта кăтартнă формăлă квитанци пулсан çеç тивĕçлĕ шутланат.

Отдел Мер и весов НКВД Чувашской АССР.

Адрес: г. Чебоксары, Октябрьская, 5.

Квитанция №

„ “ 193 г.

Принято (полное наименование организации) за поверку измерительных приборов согласно заявления

Наименование	Количество	Такса	Сумма Р.	Сумма К.

Итого (Сумма прописью)

Принял

М. П.

Уплатил

„ХИМЛЕССЫРЬЕ“

Свердловскри кантурне

сухăр йухтаракан маçтăрсем, вздымщиксем тата сухăр пуçтаракансем

кирлĕ

Ĕçленĕ çĕре вырăна çитме тата багаж илсе кайма çул укçине организаци тӳлет.

Çавнашкалах сутăчнăй параççĕ, тата ытти расхутсене те тӳлеççĕ.

Ытти условисемпе тĕплĕн паллашма районсенчи уполномочĕннăйсем патне пымала. Уполномочĕннăйсем — Пăрачкавра, Йелчĕкре тата Канашра пур.

„Свердхимконтора“.

2—1

ГОРЬКИНЧИ **ПРОТЕЗ КОМИÇÇИЙĔ**

Чăваш республикĕнче çак кунсенче ĕçлет:

Шупашкарта майăн 11-12-мĕшĕсенче
„ ийунĕн 11-12 „
Канашра майăн 19 „
„ ийунĕн 19 „
Улатăрта майăн 21 „
„ ийунĕн 21 „

Йалсоветсен, районсенчи социалла обеспечени пайĕсен протез тутарма йе йусаттарма инвалидсене кăтартнă сруксенче комиççи ĕçленĕ пунктсене йамала.

Вылăхсене çитермели курăксен вăррине илме ВАСКĂР!

Вылăхсене çитермели курăксен вăррине акнипе çарансене лайăхлататăр, çавăнпа пĕрлех вылăхсене çитерме курăк нумай хатĕрлеме пултаратăр.

Пур колхозсене, организацисене тата уйрăм граждăнсене Госсортфонд Канашри—расчотный счот № 251, Улатăрти—расчотный счот № 29, Шупашкарти—расчотный счот № 179 тата Çĕрпӳри—Шупашкарти расчотный счочĕ № 179 вăрлăх базисем урлă çарансем тата вылăхсем çӳретмели вырăнсем çине акмали курăксен вăррисене ирĕклĕн сутни çинчен пĕлтерет.

Çаран çинчи овçаницă вăрри пĕр килограм—3. 25 пус.

Тимофейĕвкă вăрри пĕр килограм—4. 10 пус.

Ыраш курăкĕ вăрри пĕр килограм—5 т.

Тилĕ хӳри курăк вăрри пĕр килограм—2 т. 60 пус.

Кусемсĕр пуçне тата хĕрлĕ клевĕр, лупин вăрлăхĕсем пур. Тĕплĕн çак адрĕспе ыйтса пĕлме пултаратăр: Шупашкар хули, Ленин урамĕ, 42. Телефон № 57. Госсортфонд.

АЧАСЕН КАРШЛĂХРИ САНАТОРИЙĔ

Кăçал майăн 15-мĕшĕнче уçăлат. Путовкăсене Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕ парат тата догăвăрсене те унтах тумала.

САНАТОРИНЕ културник - байанис, педагог, медицинă ĕçне пĕлекен сестрасем, повăр помошникĕ, официантсем, кастелланшă тата кладовщчик

кирлĕ

2—1

ЧĂВАШАВТОГУЖТРЕСТА

пассажирсене лартса çӳреме права илнĕ II-мĕш тата III-мĕш класлă

шоферсем кирлĕ

Автомашинăсене йусама

ăста механиксем, слесăрсем тата лавăçсем КИРЛĔ

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Автогужтрест.

2—1

ГИДРОУЗЕЛĂН

Инженерлă-геологи ушкăнне

(Кадыков урамĕ, № 6)

КОЛЛЕКТĂРСЕМ КИРЛĔ

Тăхăр çуллă шкул пĕтернисене (арçынсене тата хĕрарăмсене) йышăнаççĕ, малтан вĕсен инженерлă ушкăн çумĕнче практикă ĕçĕнче пулмала.

ЧĂВАШСОЙУЗĂН

учотпа отчот пайне

БУХГАЛТĔР-аналитик инструктăр

КИРЛĔ

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Чăвашсойуз, учотпа отчот пайĕ.

2—1

Академи театрĕнче

1937—38 çулсенчи çезон хупăнат

Йулашки спектаклсем

Майăн 10-мĕшĕнче

Вырăсла спектакăл

Л. Н. ТОЛСТОЙ

АННА КАРЕНИНА

Аслă режиççор

Г. В. Странский лартат.

Художник

Й. Н. Сапожникăв

Талон № 189 тата № 190.

Абонемент № 3—пур талонĕсем те

Упономоченный Чувашглавлита № 233

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 408